Йĕпреç районĕн хаçачĕ

# ÇĔНТЕРЎШĔН

Юнкун
2007 ç., утă, 18

57 /8974/№

Хаçат 1932 çултанпа
тухса тăрать
Хакĕ ирĕклĕ

электронлă адрес:
ibresi@press.cap.ru

РЕСПУБЛИКА ХЫПАРĔСЕМ

## РЕСПУБЛИКА ОПЫЧĔПЕ РАÇÇЕЙ РЕГИОНĔСЕНЕ ПАЛЛАШТАРĔÇ

Чăваш Республикин Президенчĕ Николай Федоров ячĕпе Федерацин физкультура тата спорт енĕпе ĕçлекен агентствăн ертӳçинчен Вячеслав Фетисовран çыру килнĕ. Çырура çапла палăртнă: «Сире Чăваш Республикинчи физкультурăпа спорта аталантарассишĕн яланах тимлесе ĕçленишĕн, Раççей Федерацийĕнчи спортăн наци тĕсĕсене аталантарассине хăвăр пысăк тӳпе хывнишĕн тав тăватпăр».

Вячеслав Фетисов çырура çакна та палăртнă: Чăваш Енĕн физкультура тата спорт министрĕ Анатолий Николаев утă уйăхĕн 27-мĕшĕнче Росспорт коллегийĕнче тухса каланинче усăллă тата тĕплĕ сĕнӳсем пулнă. Агентство ертӳçи Чăваш Енре физкультурăпа спорта аталантарассипе туса ирттернĕ ĕçсен опычĕ çинчен калакан информацие Раççей Федерацийĕн субъекчĕсен ĕç тăвакан органĕсен ертӳçисем патне çитерме шантарнă.

***ЧР ПА пресс-служби.***

## ÇУЛ-ЙĔР ТУМА ТĔНЧЕ БАНКĔ ПУЛĂШĔ

Чăваш Республикин Финанс министерствинче «Çул-йĕр тăвас тата ăна çĕнетес программăна йĕркелес, укçа-тенкĕпе тивĕçтерес енĕпе Чăваш Енре пухнă опыт» темăпа иртнĕ семинара премьер-министр тивĕçĕсене пурнăçлакан Н. В. Смирнов, Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ – хула строительствин тата общество инфратытăмĕн аталанăвĕн министрĕ А. Н. Гончаров, Мордва тата Мари Эл республикисен финанс министрĕсем Н. В. Петрушкинпа Е. Д. Рыжаков, Пĕтĕм тĕнчери банкăн финанс корпорацийĕн (МФК) представителĕсем Е. А. Бургунская, Н. Куреши тата ытти официаллă çынсем хутшăннă. Калаçу Чăваш Республикин Президенчĕ Н. В. Федоров пĕлтĕр республикăри пур яла та асфальт сарнă е хытарнă çулпа çыхăнтарас тĕлĕшпе йышăннă анлă программа тавра пынă. Асăннă программăна пурнăçлама пĕлтĕрех 1 миллиард тенкĕ хывнă.

Виçĕ çуллăх бюджетпа килĕшӳллĕн, 2008-2010 çулсенче çак тĕллевпе республика бюджетĕнчен 7,8 миллиард тенкĕ уйăрĕç. Кунсăр пуçне хушма инвестицисене явăçтарма палăртаççĕ. Пĕтĕм тĕнчери банкăн инвестици уйрăмĕ программăн пĕрремĕш тапхăрĕ валли 1,3 миллиард тенкĕ уйăрма йышăннă та ĕнтĕ. Кăçал ялсенче 400 çухрăм çул хута каймалла, çавăн пекех 150 çухрăм анлă çулпа кĕперсене юсĕç.

Пĕрремĕш вице-премьер – финанс министрĕ Н. В. Смирнов палăртнă тăрăх, çул-йĕр хуçалăхне йĕркелес çĕрте тĕнче шайне çитни республикăшăн питĕ пĕлтерĕшлĕ: «Пирĕн туслă ĕç хутшăнăвĕсем 2006-2010 çулсенче автомобиль çул-йĕрне тумалли программăна пурнăçлама çĕнĕ инвестицисем тупма пулăшĕ...»



## НОВИКОВСЕН ÇЕМЙИ ВĂЙЛИСЕМ ХУШШИНЧЕ

Утă уйăхĕн 14-мĕшĕнче Çĕрпӳ районĕнчи Опытнăй поселокĕнче республикăри патшалăх влаçĕн тата вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен ĕçченĕсен VI Спартакиади иртрĕ. Илемлĕ уçланкăна Чăваш Республикин Президенчĕн Администрацийĕн, министерствăсен тата влаçăн федераци органĕсен территори подразделенийĕсен, районсемпе хуласен администрацийĕсен чысне хӳтĕлекен 56 команда пухăннă. Унта пирĕн район администрацийĕ те команда тăратнă. Чиновниксем комбинаци эстафетинче, мини-триатлон тата канат туртас енĕпе, автомобиле кукăр-макăр çӳретессипе тупăшрĕç. Пур ăмăрту та хĕрӳ иртрĕ, кашниех çĕнтерĕве хăйĕн тӳпине хывма вăй хучĕ. Туçари Новиковсем çемье пуçлăхĕ Олег Александрович ертсе пынипе хăйсен ушкăнĕнче иккĕмĕш вырăна тухрĕç, Ксения Гурьева вара мини-триатлон енĕпе ăмăртса виççĕмĕш вырăн йышăнчĕ. Пирĕн водительсем автомобиле эрешлесе çӳретессипе хăйсен ĕçтешĕсем хушшинче виççĕмĕш кăтарту туптарĕç.

Йăла енĕпе йĕркеленĕ конкурс илĕртӳлĕхĕпе тата ăмсанулăхĕпе тыткăнларĕ. Ăна ăмăртăва килекен командăсене çӳллĕ шайра кĕтсе илес, палаткăсен хулине тĕрĕс вырнаçтарас, хуçалăх блокне санитарипе гигиена нормисене пăхăнма пулăшас, çутçанталăка сиенлессинчен сыхлас, ăмăртусене хутшăнакансене вĕри апатпа тивĕçтерессине йĕркелес, спартакиада иртнĕ вăхăтра йĕркелĕхе пăхăнас тĕллевпе ирттернĕ. Хатĕрленĕ блюдăсен хăйнеевĕрлĕхĕ, çĕнĕлĕхĕ – пурте савăнтарса тĕлĕнтерчĕç.

**ЎКЕРЧĔКРЕ:** *Олег Александрович Новиков Михаил тата Алексей ывăлĕсемпе пĕрле.*

***Н. АТАМОВА сăнӳкерчĕкĕ.***

## ХИСЕП ГРАМОТИПЕ НАГРАДĂЛАНĂ

Вырăнти влаç органĕсенче нумай çул тӳрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн тата общественăлла ĕçе активлă хутшăннăшăн **Ольга Федоровна МАЛЯКИНАНА** (Йĕпреç поселокĕ) Йĕпреç районĕн Хисеп грамотипе наградăланă.

## ПАРК ХИТРЕ САДПА ПУЛĔ

Йĕпреç поселокĕн центрĕнче район администрацине хирĕç пулас парк валли вырăн палăртса хунă. Кунта, чукун çул хĕрринчи лаптăксенче, ку таранччен ашкăракан ӳсен-тăрансемпе тата тĕмсемпе чăтлăхланса ларнă хуçасăр садсен территорийĕнче йĕрке тăвас тесен, Йĕпреç поселокĕнчи предприятисемпе организацисенче ĕçлекенсен нумай ĕç туса ирттерме тивет.

Эпир пĕрле чух – пысăк вăй. Çакна палăртма кăмăллă, поселокри предприятисен ĕçченĕсем вырăнти пуçлăхсемпе тата ертӳçĕсемпе пĕрле кашни эрнерех кĕçнерникун ирттерекен массăллă санитари кунĕсене пĕр шухăшлăн пухăнаççĕ, территорие ватă йывăççенчен тата кивĕ хуралтăсенчен тасатаççĕ.

Йĕпреç поселокне тирпей-илем кĕртессипе утăм хыççăн утăм тăваççĕ. Анлă сарăлнă ĕçе сăнанă май поселокри кашни çынах, ахăртнех, пурнăçăн лайăх енĕсем пирки ĕмĕтленет: куç умне пулас паркăн сулхăн аллеи, тирпейлĕ саксемпе каççерен çунакан хунарсем, чечеке ларакан панулми, слива тата чие йывăççисемпе илĕртекен сад тухса тăраççĕ. Тĕрĕссипе каласан, çак паркра пирĕн ачасемпе мăнуксем, каярахпа – пирĕн йăха тăсакансем уçăлса çӳресе канĕç.

**18 июля 2007 г. в прокуратуре Ибресинского района по адресу: п. Ибреси, ул. Пионерская, д. 31 будет вести прием граждан по личным вопросам заместитель прокурора Чувашской Республики старший советник юстиции Щетинкин Виталий Порфирьевич.**

**Начало приема в 10 час. 00 мин.**

## «ВИÇĔ ÇИЧЧĔ» ТЕЛЕЙ КӲЧĔ

Эйпеç ялĕнче пурăнакан Александр Васильевичпа Олеся Николаевна Петровсемшĕн «виçĕ çиччĕрен» тăракан самант (07.07.07) чăнахах та пурнăçра чи телейлисен шутне кĕчĕ. Çемьене «çĕнĕ кайăк» хушăнчĕ вăл кун. Ирхине 7 сехет те 20 минутра вĕсен Виктория хĕр çуралчĕ. Хĕрĕн ячĕ те ăнсăртран суйласа илни мар. «Виктория» – Çĕнтерӳ! Çемьешĕн те, ялшăн та çак илемлĕ пулăм çĕнтерӳ пекех ырă туйăмсем çуратни тата акă мĕнпе çыхăннă: Вика, 3850 грамлă виçепе çуралнăскер, çемьери чунран кĕтнĕ виççĕмĕш ача, районта вара кăçал çуралнисен хушшинче 150-мĕш пепке пулчĕ. Çакăн çинчен калакан пурнăçри пĕрремĕш документа панă та ĕнтĕ хĕрачана тата унăн телейлĕ ашшĕ-амăшне.

***А. МИХАЙЛОВА.***

ЮБИЛЕЙ

# ПĔЧĔК ЯЛĂН ПЫСĂК УЯВĔ

Пысăках мар ката вырнаçнă сăртламран ку ял ал тупанĕ çинчи пекех курăнать. Ал тупане тени питех те вырăнлă, мĕншĕн тесен ялти çуртсене тухăмрах шутласа тухма пулать. Иртнĕ ĕмĕрĕн утмăлмĕш çулĕсенче ку яла «малашсăррисен» шутне кĕртнĕччĕ. Çапла, пулнă çавăн пек вăхăт, пулнă. Пĕчĕк ялсем куçран пачах та çĕтме пултарнă пулĕччĕ енчен те çĕршывăн хальхи ертӳçисем тивĕçлĕ мерăсем йышăнман пулсан. Çав утăм ял çыннисен кăмăл-туйăмне çĕклерĕ, çамрăксем хулана туртăнассине чарса лартрĕ. «Халĕ вара, пачах урăхла, – тет манпа калаçакан С. П. Наумов. – Хуларан яла куçаççĕ: кам пушă ларакан çурта туянать, кам – çуллахи вăхăтра канма килет. Тĕп усадьбăран кĕçех яла такăр çул çитĕ. Ишсе тухми пылчăк çăрăлатчĕ вĕт. Паянхи тĕп тĕллев – çынсене тепĕр хут яла илсе килесси – çăмăл ĕç мар ку. Вĕсене мĕнле çавăрмалла-ха? Хулари хваттерĕсене кам пăрахса хăвартăр? Хăшĕсен тата ялта пурăнас туртăмĕ те сӳннĕ ĕнтĕ. Тепĕр тесен, камăн пурăнас килтĕр-ха упа шăтăкĕ пек вырăнта? Чирлесен, ăçта кайса çӳрĕн? Больницăна мĕнле çитмелле? Кам леçсе ярĕ? Тĕп усадьбăрах – урăхла лару-тăру. Мĕн кирли – пурте алă айĕнче. Пурăнма та хаваслăрах унта».

Апла пулсассăн та Сергей Петрович çак çĕр çинче çирĕп тĕпленнĕ. Ăна нихăçан та пăрахса каймĕ вăл. Çак кунсенче хăйне никĕсленĕренпе 85 çул çитнине паллă тăвакан Савкка – чи хакли те чи сăвапли. Çĕршывăн тĕрлĕ кĕтесĕсенчен килнĕ хăнасемпе пĕрле чаплăн уявларĕç юбилее савккасем. Çак йĕркесен авторĕ те, унта яра кунах пулнăскер, акă мĕн курса ĕненчĕ ялта: Сергей Петрович – кунти пĕчĕк «патшалăхăн» президенчĕ иккен. «Красный партизан» колхозпа Пучинке ял тăрăхĕн администрацийĕ ирттерекен пĕр мероприятирен те юлмасть вăл. Ентешĕсем ăна, Пучинке ял Пухăвĕн депутатне суйласа, чăннипех пысăк чыс кӳнĕ. Пĕчĕк ялăн пурнăçĕ йĕркеленсе пыни кашни утăмрах сисĕнет. Ĕç ветеранĕ, общество пурнăçне хутшăнакан, мĕнпур ырă ĕçсене пуçаракан чунтан-вартан çакна çирĕп ĕненет: Савкка – ял çыннисен тĕрекĕ, вăл пулмасан, кунта пурнăç хĕлхемĕ ялкăшас çук. «Çĕр хуçа пуррипе пурăнать», теççĕ халăхра.

Юбилей уявĕ Сергей Петровичăн тăрăшулăхĕпех çыхăннă.

... Уяв Чăваш Республикин ялавне çĕкленипе пуçланчĕ. Пучинкери культура çурчĕн илемлĕх ушкăнĕн ăстисем республика Гимне шăрантарчĕç. Ялав çĕклеме тивĕçнисем С. П. Наумовпа Савкка ялĕнче çуралса ӳснĕ, Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ врачĕ Н. К. Кириллов пулчĕç.

Савккара кун çути курнă, хальхи вăхăтра Йĕпреçри этнографи музейне ертсе пыракан А. Г. Майорова сăмах пачĕç. (Александр Геннадьевич, çак уяв тивĕçлĕ шайра ирттĕр тесе, питĕ нумай тăрăшнă). Вăл тăван ялĕ «утса тухнă» çул-йĕре çирĕплетекен документсене илсе кăтартрĕ. Йĕпреç районĕн архивĕнче мĕн кирлине чылай тупма пултарнă таврапĕлӳçĕ. Яла никĕслекенĕсен хушшинче 1922 çулта Пучинкерен куçса пынă Петр Даниловпа Сергей Викторов тата ытти хăш-пĕр маттур хресченсем пулнă-мĕн.

Александр Геннадьевич хăйсен ялĕнче çуралса ӳснĕ, Тăван çĕршывăн тĕрлĕ кĕтесĕнче ĕçлесе пурăнакан чаплă ентешĕсем çинчен тулли мăнаçлăхпа каларĕ. Ку списокра Чăваш Республикин искусствăсен тава тивĕçлĕ деятельне Николай Теветкел поэт-куçаруçăна, Николай Руссановпа Николай Кириллов тава тивĕçлĕ ĕçченсене, биологи ăслăлăхĕсен докторне Николай Кириллов профессора тата ыт. те куратпăр эпир.

Пучинке ял тăрăхĕн пуçлăхĕ И. Я. Денисов савккасене юбилей ячĕпе саламларĕ, хастар çынсене администрацин Хисеп грамотисемпе, парнесемпе чысларĕ. Чыс-сума тивĕçнисем хушшинче – Сергей Наумов, Ольга Белова, Нина Наумова, Мелания Татарик т. ыт. те.

Ялта чи ватă çынна Михаил Гаврилович Гаврилова та ăшшăн чысларĕç уявра. Вăл нумай пулмасть 86 çул тултарнă иккен. Хĕрарăмсенчен чи ватти – Раиса Егоровна Степанова. Ăна та парнесĕр хăвармарĕç.

Ксения Игнатьева вара – ялта чи çамрăкки, сăпкаран тин кăна хăпнăха. Хаклă ветерансемпе пĕчĕк чиперкке ячĕпе хаваслă юрă шăрантарчĕç ялти талантсем. Юрă сăмахĕсене те, кĕввине те Пучинке «шăпчăкĕ», ялйышра чыс-хисеппе усă куракан Лилия Иванова çырнă иккен.

Савккана малтан куçса ларнă Петр Даниловичăн ывăлĕ Петр Петровичпа унăн мăшăрĕ Лидия Исаковна та кунашкал чыс-сума нихăçан та тивĕçмен: вĕсене пурнăç çулĕ тăрăх юнашар утма тытăннăранпа çур ĕмĕр çитнĕ ятпа саламласа асăнмалăх парне пачĕç.

Симĕс курăк çинче, кивелнĕ клуб çурчĕ умĕнчи тӳремлĕхре кун каçипех савăнчĕ халăх. Спорт ăмăртăвĕсем иртрĕç. Ватти-вĕтти таранах чупма тухрĕç. 60 тата 100 метра тупăшса ăмăртрĕç. Çĕнтерӳçĕсене кăна мар, старта тухнă ытти çынсене те парнесем кĕтрĕç. Вĕрен туртса та

**/Вĕçĕ 6-мĕш стр./.**

## Канашлу иртнĕ

«Патман» ял хуçалăх кооперативĕн фермин никĕсĕ çинче эрнекун районти выльăх-чĕрлĕх пăхакансен канашлăвĕ иртрĕ. Унăн ĕçне хутшăннисем – хуçалăхсен ертӳçисемпе фермăсен пуçлăхĕсем, зооветспециалистсем малтанах асăннă кооперативри выльăх-чĕрлĕх пăхакансен ĕçĕпе паллашрĕç. Кунти коллектив чылайранпа ĕнтĕ районти тупăшура малта пырать. Кăçал та ӳсĕм-çитĕнӳ тăвать вăл. Хăйсен ĕçĕ-хĕлĕ çинчен пухăннисене кооператив ертӳçи В. К. Никифоров каласа пачĕ.

Çакăн хыççăн семинар-канашлу Çĕнĕ Выçлири культура çуртĕнче малалла тăсăлчĕ. Ăна район администрацийĕн ял хуçалăх пайĕн пуçлăхĕ Н. П. Чугаров уçрĕ тата ертсе пычĕ. Пухăннисен умĕнче районăн тĕп зоотехникĕ А. И. Иванова (районти выльăх-чĕрлĕх пăхакансен кăçалхи 6 уйăхри кăтартăвĕсем), районăн тĕп ветврачĕ В. А. Иванова (кĕтĕве çĕнетессин тишкерĕвĕ), Чăваш Республикин Ял хуçалăх министерствин пирĕн районти представителĕ Е. В. Филиппова (бюджетран уйăракан укçа-тенкĕпе усă курасси) тухса калаçрĕç.

Канашлу ĕçне район пуçлăхĕ А. И. Петров хутшăнчĕ, сăмах каларĕ.

## Комисси шкулсене тĕрĕслет

Район пуçлăхĕн çумĕ В. Л. Михалик ертсе пыракан комисси (унăн йышне Роспотребсоюзăн Канаш хулинчи территори уйрăмĕн тĕп специалисчĕ Т. Г. Алексеева, психологипе педагогика ыйтăвĕсемпе ĕçлекен центр специалисчĕ Н. М. Шорникова кĕреççĕ) районти ял тăрăхĕсен тирпей-илемне тĕрĕсленĕ. Уйрăмах вĕрентӳ учрежденийĕсем çĕнĕ вĕренӳ çулне мĕнле хатĕрленнипе кăсăкланнă.

Комисси членĕсем Пучинкери, Йĕпреçри 1-мĕш тата 2-мĕш, Кĕлĕмкассинчи вăтам шкулсен ĕçне лайăх енĕпе палăртнă.

Çавăн пекех шкул çулне çитмен ачасен учрежденийĕсенче те спорт площадкисене, вылямалли вырăнсене, йышăнмалли пӳлĕмсене хатĕрлессипе юсав ĕçĕсене кирлĕ шайра йĕркеленĕ.

***/Район администрацийĕн сайтĕнчен/.***

**ÇĔНĔЛĔХ**

## 4 кун хушшинче çурт туса лартнă

Свердловск облаçĕнчи Снегирь поселокĕнче Пĕтĕм Раççейри рекорда туптанă. Кунта 77 сехет хушшинче икĕ хутлă пурăнмалли çурт туса лартнă.

Строительсем питĕ кĕске срокра çурт никĕсне хывнă, стенисене çĕкленĕ, тăррине витнĕ тата пӳрт ăшчиккинчи ĕçсене – çакăнса тăракан маччана тата пӳлĕмри ваннăйри оборудование вырнаçтарнă таранах – пурнăçланă. Раççей рекордне палăртса хăварас тесе стройкăра видеокамера вырнаçтарнă. Мĕнпур ĕçе ун тăрăх строительство енĕпе ĕçлекен экспертсем тата Гиннесс рекорчĕсен Кĕнекин Раççейри представителĕсем сăнаса тăнă.

Çакнашкал çурта çĕклесе лартнă чухне пурăнмалли çурт-йĕре хăвăрт тума май паракан çĕнĕ строительство технологийĕсене те презентациленĕ. Уйрăммăн илсен, «рекордлă» çурта тума çурта васкавлă тумалли технологисемпе усă курнă. Унăн йышне питĕ лайăх ăшă тытакан, çуртăн умне илĕртӳллĕ кăтартакан виçĕ сийлĕ хаклă мар блоксем те кĕреççĕ. Çак технологи ăшша перекетлекен чăн-чăн пурăнмалли çурт-йĕр çавăрса лартма май парать. Çавăнпа та вырăнти çурт-йĕр çавăракансем çак çĕнĕлĕх Урал регионĕнче кăна вăй илмĕ, «Раççей гражданĕсене – пурăнмалли хăтлă çурт-йĕр» проекта пурнăçа кĕртме пулăшĕ тесе шутлаççĕ.

***/«Аргументы неделі», 28№/.***

## ХУМРИ ИШЕК ЯЛĔН УЯВĔ



Хурамал ял тăрăхĕнче Хумри Ишек ялĕн кунĕ иртрĕ. Йăлана кĕнĕ уяв ял хĕрринче, Хум шывĕ айккипе выртнă хитре вырăнта, кĕрлерĕ. Ял çыннисене район администрацийĕн ял хуçалăх пайĕн пуçлăхĕ Николай Чугаров, ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Валерий Евграфов, «Патман» ЯХК ертӳçи Владимир Никифоров саламларĕç. Çак кун уяв халăхĕ умĕнче ĕçре палăрнисене чысларĕç, тĕрлĕ спорт мероприятийĕсене йĕркелерĕç.

Уявра суту-илӳ ĕçченĕсем те маттур пулчĕç, чăваш эстрадин çăлтăрĕсем те хаваслă кăмăл-туйăм парнелерĕç.

**ӲКЕРЧĔКРЕ:** *чăваш артисчĕсем концертпа килнĕ.*

## ПИТРАВ ПРАÇНИКĔ

Утă уйăхĕн 12-мĕшĕнче Питрав кунĕнче Ирçе Çармăс ял тăрăхĕнче халăх уявĕ иртрĕ. Праçнике фольклор ушкăнĕ вăйă картипе уçрĕ. Пухăннисене чи малтан ял тăрăхĕн пуçлăхĕ С. Н. Карсаков саламларĕ, вăл çавăн пекех хăнасене, уява йĕркелекенсене тата спонсорсене тав турĕ. Ирçе Çармăсри культура çурчĕн художество пултарулăхĕн ăстисем фольклор номерĕсемпе пуянлатнă культура программи хатĕрленĕ. Вĕсем уява пухăннисене халăх кĕввисемпе, такмакĕсемпе, юррисемпе тата савăнăçлă ташăсемпе савăнтарчĕç. Концерт номерĕсем хушăран тĕрлĕ конкурссемпе тата вăйăсемпе ылмашăнчĕç. Чи хăюллисемпе вăйлисем хапха урлă кире пуканĕ ывăтассипе, автомобиле тата тиенĕ лава туртса куçарассипе, шыв тултарнă витресене кĕвентесемпе йăтса чупассипе тата ытти спорт енĕсемпе тупăшрĕç. Хăнасене пурне те наци апачĕпе – шӳрпепе хăналарĕç.

**ФУТБОЛ**

## ШАНĂÇ ПУР

Иртнĕ вырсарникун район чысне хӳтĕлекен пирĕн команда – «Йĕпреç» футбол клубĕ Çĕмĕрлере унти «Темп» командăпа тĕл пулса вылярĕ. Хулари стадионта иртнĕ вăйă никам çĕнтерейменнипе, 1:1 шутпа вĕçленчĕ. Çĕмĕрлесен хапхине мечĕк тапса кĕртекенĕ тапăнса вылякан Александр Макаров пулчĕ.

Черетлĕ, 10-мĕш тур çитес вырсарникун, утă уйăхĕн 22-мĕшĕнче Йĕпреçри стадионта иртет. Вăйă 15 сехетре пуçланать. Йĕпреçсем Çĕмĕрле районĕнчи Эскетен ялĕнчи футболистсемпе тĕл пулаççĕ.

***В. ВАСИЛЬЕВ.***

**ПУЛНИ-ИРТНИ**



## ИНКЕК ХЫÇÇĂН ИНКЕК

Райхаçатăн иртнĕ номерĕнче эпир кун пирки çырса пĕлтернĕччĕ, Йĕпреç поселокĕнче, «Елена» магазин тĕлĕнче, инкеклĕ ĕç пулса иртнĕ. «ВАЗ-2101» автомашина водителĕ авари пулнă вырăнтах нумай сурансене пула вилсе кайнă. Çав машинăра пулнă икĕ хĕрарăмран пĕри хальхи вăхăтра райбольницăра реанимаци уйрăмĕнче йывăр выртать. Пулса иртнин версийĕсенчен пĕри – авари вăхăтĕнче вилнĕ водитель ӳсĕр пулнă, теççĕ. Ку ĕçпе пăнчăна экспертиза пĕтĕмлетĕвĕсем лартĕç.

Çак кунсенче йĕпреçсене утă уйăхĕн 12-мĕшĕнче 23 сехет те 20 минутра «Аниш» (Йĕпреç – Канаш) автоçул çинче Çĕрпӳелĕнчен инçех мар çул пăрăнчăкĕнче пулса иртнĕ тепĕр инкек кулянтарчĕ. Пĕчĕк Патăрьелĕнче çуралса ӳснĕ, халĕ Шупашкарта пурăнакан Ю. Б. Архипов, ӳсĕр пуçпа «ВАЗ-2107» автомашинăна (регистратура палли – Е105 ВТ) тытса пынăскер, хирĕç килекен «ВАЗ-2115» автомашинăна (регистратура палли – С 718 ВН) пырса тăрăнтарнă. Ăна А. В. Ефимов тытса пынă.

Çак инкеке пула икĕ пассажир пурнăçĕ татăлнă. Вунтăваттăри М. В. Ефимова авари пулнă вырăнтах вилсе кайнă, «ВАЗ-2107» автомашинăра пулнă пассажирăн – Пĕчĕк Патăрьелĕнчи О. В. Терентьевăн чĕри тепĕр кун больницăра тапма чарăннă. Икĕ автомашинăри водительсене тата ытти пассажирсене район больницине ăсатнă.

Çак инкеклĕ ĕçе тĕпчеççĕ.

Хисеплĕ граждансем, çулсем çинче тимлĕ те сыхă пулăр. Енчен те руль умĕнче ӳсĕр водитель ларнине курсан, кун пирки, пĕр тăхтаса тăмасăр, патшалăх çул çӳрев хăрушсăрлăхĕн инспекцийĕн уйрăмĕн ĕçченĕсене е милицин дежурнăй чаçне пĕлтерĕр. Руль умĕнчи ӳсĕр çын – хăрушă преступникпа танах. Ун пек водительсене пирĕн автоçулсем çинче вырăн çук!

**ӲКЕРЧĔКРЕ:** *аварие лекнĕ автомашинăсем.*

## ÇУЛ ĔÇКĔНЕ КАÇАРМАСТЬ

Утă уйăхĕн 6-мĕшĕнче, 19 сехет те 30 минутра, Пысăк Упакасси – Пĕчĕк Упакасси автоçул çинче «Трудовик» колхозăн машинăпа трактор паркĕнче икĕ транспорт хатĕрĕ çапăннă тĕслĕх пулса иртнĕ.

«Трудовик» колхозăн «Беларусь-82.1» трактора (регистрации палли – 62-95 УК) ӳсĕр пуçпа тытса пынă Я. А. Ерилеев Шупашкар районĕнче пурăнакан Д. Л. Кудряшовăн «Багем-27851» автомашинине пырса тăрăнтарнă.

Авари вăхăтĕнче никам та инкек тӳсмен, кювета чикеленнĕ «Багем» автомашина вара сиенленнĕ.

Тепĕр хут аса илтеретпĕр – йĕркене пăсрăн-тăк, хăвна та, ыттисене те хăрушă лару-тăрăва кĕртсе ӳкерме пултаратăн, çул-йĕр хăрушсăрлăхĕн йĕркисене сĕмсĕррĕн пăсакансене явап тыттарма саккунсене питĕ хытарнă, анчах хăш-пĕр водитель е механизатор çакна ăша хывасшăн мар. «Вĕрене тем чул явсан та вĕçĕ пулать» тенĕ ваттисем. Транспорт хатĕрĕпе ӳсĕр пуçпа çӳренĕшĕн яваплăха унчченхи пек штраф тӳленипе кăна ирттерсе яраймастăн, ĕçкĕç-водительсене çул çӳремелли ирĕкрен 18 уйăхран пуçласа 24 уйăх таранччен хăтараççĕ.

Никама та каçару пулмасть. Çул-йĕр вара йĕркесĕрлĕхе, ĕçкĕне тата сĕмсĕрлĕхе каçармасть.

***А. ЛУКЬЯНОВ,***
***ÇÇХПИ уйрăмĕн пропаганда енĕпе ĕçлекен инспекторĕ.***

**ÇИВĔЧ ЫЙТУ**

## ÇАПКАЛАНЧĂК ЙЫТĂСЕМ ИНКЕК КӲРЕÇÇĔ

Юлашки вăхăтра Хыр-касси ялĕн урамĕсем тăрăх ăçта пăхнă унта йытăсем ирĕкре çапкаланса çӳренине курма пулать. Вĕсем те юнашарти хырлăхран тухаççĕ е кил хуçисем хăйсем кăларса яраççĕши? Анчах та çав Хураçкасемпе Кампурсенчен темĕнтепĕр кĕтме пулать-çке. Акă, нумаях пулмасть вĕсем ялти пĕве хĕррине ушкăнпа пырса тухнă та, шывра чӳхенме килекен хурсене тапăннă. Выçăскерсем, хырăмĕсене тăрантарасшăн пулнă ĕнтĕ. Çав кун эпĕ каç пулттипе 6 хур чĕппине кĕтсе илеймерĕм. Вĕсем йытăсен çивĕч шăлĕ айне лекрĕç.

Тĕлĕнетĕп хăш-пĕр çынсенчен. Вĕсем кил-хуçалăхĕнче икшер е унтан та ытларах йытă усраççĕ. Тăвата уралла чĕрчуна шанчăклă сыхлавçă пултăр тесен, ăна куçран вĕçертмелле мар. Хуласенче шăпах çапла тăваççĕ те, хуçи вара тусĕпе уçăлса çеç çӳрет. Ялта вара пачах урăхла «ӳкерчĕк». Яваплăха туйман йытă хуçисене асăрхаттарасси асра та çук. Ман шутпа, вырăнти ял тăрăхĕн администрацийĕн йĕркене пăхăнманнисенчен çирĕпрех ыйтма тытăнмалла. Унсăрăн çапкаланчăк йытăсен эшкерне пуçтахланма ниепле те чараймăпăр.

***А. ЕФРЕМОВ,***
***ĕç ветеранĕ.***

## ÇАРАН ÇИНЧИ ПĂШАЛ САССИ

**Канаш район администрацийĕн пуçлăхĕ пулнă Сергей Антонов хăйĕн тăваннех персе вĕлерни çинчен сăмах çӳрет.**

– Республикăри Аслă суд пресс-служби пĕлтернĕ тăрăх, Канаш районĕн пуçлăхĕ пулнă çынна уйрăмах йывăр преступлени тунăшăн – хăйĕн иккĕмĕш сыпăкри пиччĕшне вĕлернĕшĕн айăплаççĕ. Утă уйăхĕн 3-мĕшĕнче ун пирки РФ УКăн 105 статйин пĕрремĕш пайĕпе – тепĕр çынна юриех вилĕм кӳнĕшĕн айăпласа уголовнăй ĕç пуçарнă. Тепĕр кунне вара ăна хупса лартмалла мера йышăннă. Çăлкуçсем пĕлтернĕ тăрăх, синкер ĕç тунă 45 çулхи çын хальхи вăхăтра Çĕрпӳри следстви изоляторĕнче ларать.

Пĕлтĕрхи кĕркунне ĕçрен тухса, вырăнти «Урюм» ял хуçалăх предприятине ахаль зоотехникра ĕçлеме вырнаçнă хыççăн Канаш районĕнчи Сиккасси ялĕнче мĕн пулса иртнĕ-ха? Хирĕçӳ майĕпен хĕрсе пынă. Тăван тăрăха таврăнсан, С. Антонов кăмăл-сипет енчен кăткăс лару-тăрăва çакланнă. Хăй калана тăрăх, ял çыннисем унран тăтăшах тарăхласа кулнă-мĕн: «Эсĕ мĕнле пысăк пуçлăх пулнă, халĕ вара никам та мар». Çунакан кăвайт çине çу сапаканĕсем пуçлăхăн хăш-пĕр тăванĕсемех пулнă, теççĕ. «Пысăк майсем пулнă чухне эсĕ пире нимĕн туса та пулăшман» тесе ӳпкеленĕ. Çывăх тăванĕсемпе çакăн пек пăсăк çыхăнусем пулса кайма пулăшнă тепĕр самант та пулнă. Çакă вăл – çирĕм çул каялла паллă мар сăлтавсене пула Антоновăн ашшĕ вилни. Çавăн чухне ун ӳтне çăл тĕпĕнче тупнă. Тахçанах пулса иртнĕ синкер ĕç тăванĕсен паянхи хутшăнăвĕсенче те йĕрне хăварнă. Кунсăр пуçне, район пуçлăхĕ пулнă çын юлашки вăхăтра хăйне урăхларах тытма пуçланине те асăрханă çынсем. Вăл час-часах каялла çаврăна-çаврăна пăхнă, шăппăн калаçнă, хăйне такам йĕрленĕ пек туйса çӳренĕ. Чăн та, отставкăна кайнă хыççăнхи вăхăт уншăн – çав тери вăйлă хумханупа кăмăл-сипет пăлханăвĕ хушшинче иртнĕ уйăхсем.

Утă уйăхĕн 3-мĕшĕнче, 15 сехетре, районсен хушшинчи прокуратура прокурорĕ С. Павлов пĕлтернĕ тăрăх, С. Антонов хăйĕн «иккĕмĕш сыпăкри шăллĕпе кăмăлсăр пулнине палăртса, ăна вĕлерме шухăшланă». Çак тĕллевпе пăшал илнĕ те, хăйĕн УАЗĕ çине ларса, хирте ывăлĕпе тата тăванĕпе ял выльăхĕсене кĕтсе çӳрекен тăванĕ патне çул тытнă. Икĕ арçын, хăраса ӳкнĕ ачасен умĕнчех, пĕр-пĕрне хаяр сăмахсемпе кӳрентерме пуçланă. Çак харкашăва пăшалтан пени татса панă. Вырăнти котельнăйра ĕçленĕ 41 çулхи газооператор çавăнтах вилсе кайнă.

***В. ЯКОВЛЕВ.***
***/«Советская Чувашия» хаçатран/.***

# РЕШЕНИЯ Собрания депутатов Ибресинского района

## О передаче из муниципальной собственности муниципального образования - Ибресинский район

Чувашской Республики жилищного фонда в собственность муниципального образования - Новочурашевское сельское поселение Ибресинского района Чувашской Республики

В соответствии с Федеральным Законом от 06.10.2003 № 131-ФЗ «Об общих принципах организации местного самоуправления в Российской Федерации» собрание депутатов **р е ш и л о:**

Передать из муниципальной собственности муниципального образования - Ибресинский район Чувашской Республики в муниципальную собственность муниципального образования - Новочурашевское сель-ское поселение Ибресинского района Чувашской Республики жилищный фонд.

**Глава Ибресинского района**
**А. И. ПЕТРОВ.**

п. Ибреси, 3 июля 2007 г., №16/5

**ПЕРЕЧЕНЬ МУНИЦИПАЛЬНОГО ИМУЩЕСТВА, ПЕРЕД**
**ОТ МУНИЦИПАЛЬНОГО ОБРАЗОВАНИЯ - ИБРЕСИНС**
**ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ В СОБСТВЕННОСТЬ МУНИЦ**
**ОБРАЗОВАНИЯ - НОВОЧУРАШЕВСКОЕ СЕЛЬСКОЕ ПО**
**ИБРЕСИНСКОГО РАЙОНА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛ**

| № П/П | Наименование объекта | Адрес (месторасположение) объекта | Год ввода | Балансов стоимост 01.04.200 (руб.) |
|---|---|---|---|---|
| 1 | Жилой дом № 35 квартира № 4 | Чувашская Республика, Ибресинский район, с. Новое Чурашево, ул. Ленина, д.35 | 1976 | 310686,2 |
| 2 | Жилой дом № 13 квартира № 2 | Чувашская Республика, Ибресинский район, с. Новое Чурашево, ул. Кирова, д. 13 | 1972 | 186373, |
| | ИТОГО | | | 498059,4 |

## О разрешении муниципальному унитарному предприятию «Ибресинское ремонтно- техническое предприятие» продажи жилого 2-х квартирного дома по адресу, п. Ибреси, ул. Николаева, д. 4 и МУП «Водоканал Ибресинского района», здания коммерческого магазина

Согласно статье 295 Гражданского Кодекса Российской Федерации и письма директора муниципального унитарного предприятия «Ибресинское ремонтно-техническое предприятие» № 93 от 16.05.2007 г. Собрание депутатов **р е ш и л о:**

Дать согласие муниципальному унитарному предприятию «Ибресинское ремонтно-техническое предприятие» на продажу жилого 2-х квартирного дома, находящегося в стадии незавершенного строительства, расположенного по адресу: п. Ибреси, ул. Николаева, д. 4 и МУП «Водоканал Ибресинского района», здания коммерческого магазина, год ввода 1992, балансовая стоимость 196535 рублей, находящегося по адресу: п. Ибреси, ул. СХТ, д.13.

***Глава Ибресинского района***
***А. И. ПЕТРОВ.***

п. Ибреси, 3 июля 2007 г., №16/6

## ДОПОЛНИТЕЛЬНЫЙ СПИСОК умерших собственников земельных долей колхоза им. Ленина по п. Ленино

| поле №2, площадь 12,48 | | |
|---|---|---|
| 1. | Федоров Николай Семенович | п. Ленино |
| 2. | Федоров Михаил Семенович | п. Ленино |
| 3. | Викторова Александра Федоровна | п. Ленино |
| 4. | Иванов Анатолий Иванович | п. Ленино |
| 5. | Иванова Раиса Серафимовна | п. Ленино |
| 6. | Никитина Елизавета Ивановна | п. Ленино |
| 7. | Кузьмин Иван Кузьмич | п. Ленино |
| 8. | Степанова Фекла Терентьевна | п. Ленино |

**ВОПРОС-ОТВЕТ**

# ЛЕГКО, БЫСТРО И УДОБНО

**Какие преимущества в представлении отчетности в налоговую через Интернет?**

Установив специализированное программное обеспечение на персональный компьютер, налогоплательщик получает возможность подготовить отчетность и отправить его на электронный адрес оператора связи. Оператор связи проверяет электронную подпись налогоплательщика, перенаправляет отчетность в налоговую инспекцию. Расшифровать отчетность может только налоговая инспекция. На свое послание, налогоплательщик получает три протокола: первое от оператора связи с подтверждением даты сдачи отчетности (отправка возможна до 23 ч. 30 мин. отчетного дня), второе и третье от налоговой инспекции, о том, что отчетность доставлена и в случае отсутствия ошибок – принята на базу данных.

Кроме того, налогоплательщик имеет право, используя данное программное обеспечение, запросить информационную выписку о выполнении обязательств по исчислению и уплате налогов, сборов, взносов, пеней и налоговых санкций.

Межрайонная инспекция ФНС России №3 по Чувашской Республике, ЗАО «Удостоверяющий центр» совместно с Чувашским филиалом «Государственного научно-исследовательского института развития налоговой системы» ФНС России – специализированного оператора связи в Чувашской Республике 20 июля 2007 года проводит акцию «Отчетность в налоговую через СБиС++: легко быстро удобно». Принять участие в конкурсе могут все желающие организации и частные предприниматели. Место проведения – п. Вурнары, ул. К. Маркса, 4в, каб. №2.

**Ю. ДАНИЛОВА,**
**начальник отдела работы с налогоплательщиками, их регистрации и учета межрайонной инспекции ФНС России №3 по Чувашской Республике.**

## ПОСМЕЕМСЯ ВМЕСТЕ

- Мне нравится вон тот бегун с красным шарфиком вокруг шеи...
- Это не шарфик, это язык.

х х х

Телефонный звонок:
- Сережа, у нас будет ребенок!
- Прекрасно! А кто это говорит?

х х х

- Мама, а это правда, что мы произошли от обезьян?
- Не знаю, сынок, папа так и не познакомил меня со своей семьей.

х х х

Возвращается китаец из Москвы в родной Шанхай. Его спрашивают родные:
- Ну и как Москва?
- Хорошо, просторно, тишина, народу почти нет!..

х х х

Зачем люди заводят дачу? Чтобы убедиться, как приятна и хороша жизнь без нее.

# СОЦПАКЕТ ИЛИ ДЕНЬГИ: ВЫБОР ЗА ЛЬГОТНИКОМ ®

**Подходит к концу срок приема заявлений об отказе от соцпакета – до 1 октября получатели ежемесячной денежной выплаты /ЕДВ/ должны определиться, что им нужнее – льготы или деньги. Немало вопросов об этом и в редакционной почте. Ответить на них мы попросили начальника Управления Пенсионного фонда в Ибресинском районе Чувашской Республики – Чувашии ЕРМОЛАЕВА В. Г.**

**- Владимир Геннадьевич, прежде чем мы перейдем к вопросам читателей, скажите, пожалуйста, сколько в районе федеральных льготников и многие ли из них подали заявление об отказе от соцпакета?**

- На 1 июля в Ибресинском районе ежемесячная денежная выплата из федерального бюджета назначена 2826 льготникам. Из них с заявлениями об отказе от набора социальных услуг или его части обратилось 20,6 процента – это 581 льготник.

**- Каких отказов больше – от полного соцпакета или его части?**

- Большинство заявлений - об отказе от полного набора социальных услуг: их 504. От медицинской части соцпакета отказались более 48 человек, от транспортной части - 29 человек.

**- Судя по вопросам наших читателей, не все хорошо себе представляют, какие льготы предусмотрены медицинской и транспортной частями соцпакета и сколько можно получить взамен, написав «отказное» заявление. Возможно, в этом причина сомнений льготников.**

- Медицинская часть соцпакета – это бесплатные лекарства по рецепту врача и санаторно-курортное лечение, в которое также включаются средства реабилитации и ухода по рекомендации органов медико-социальной экспертизы. Если человек не нуждается в большом количестве дорогостоящих лекарств, в реабилитационных средствах и не стремится в санаторий (или врач не разрешает ему ехать на курорт) – то можно отказаться от медицинской части, и тогда с 2008 года размер ЕДВ увеличится на 456 рублей.

**- А можно отказаться только от санатория и получить компенсацию за путевку?**

- Нет, тут никаких вариантов быть не может.

**- Тогда разберемся с транспортной частью. Многие думают, что, отказавшись от нее, не смогут бесплатно ездить в городских троллейбусах и автобусах.**

- Это неверно. Транспортная часть соцпакета включает бесплатный проезд на пригородных поездах и оплату дороги до санатория и обратно. Отказавшись от этой части соцпакета, льготник со следующего года будет получать ЕДВ на 57 рублей больше, чем в 2007 году. А вот бесплатный проезд в городском транспорте в федеральный соцпакет не входит – это льгота предоставляется по усмотрению региональной власти. Получатели ЕДВ в этом году бесплатно ездят в троллейбусах и городских, и пригородных автобусах благодаря Указу Президента ЧР Н. Федорова.

**- Выходит, решить нелегкий вопрос «льготы или деньги» можно, получив прибавку к ЕДВ и сохранив часть льгот?**

- Конечно. Нуждаетесь в лекарствах, но не садитесь в пригородные поезда – можно отказаться только от транспортной части соцпакета. А если ездите поездом, но лекарств вам необходимо меньше, чем на 456 рублей в месяц – можете оформить отказ от медицинской части. Еще один вариант – отказаться от всего соцпакета и с 2008 года получать ЕДВ в полном объеме. И, наконец, можно сохранить все как есть и продолжать пользоваться и медицинскими, и транспортными льготами – заявление при этом не требуется. В любом случае выбор за льготником.

**- А если человек сначала отказался от всего соцпакета, а потом передумал – как быть?**

- Можно написать новое заявление. Но лучше все же сразу определиться окончательно. Кстати, размышлять об отказе придется каждый год. И если что-то не устроит в этом году, есть возможность изменить положение в следующем – также до 1 октября.

**- «Отказавшись от медицинской части соцпакета, я уже со 2 октября не смогу получить бесплатные лекарства?» - спрашивают читатели.**

- Сможете! Соцпакет предоставляется до конца 2007 года, и только с 1 января 2008 года будут либо выплачиваться деньги, либо предоставляться льготы – в зависимости от того, какой выбор сделает льготник до 1 октября.

**- Характерен для читательской почты и такой вопрос: «Я прописана в Ибресинском районе, живу в Чебоксарах. Где мне подавать заявление об отказе от соцпакета?»**

- Там, где получаете пенсию или ЕДВ – обратитесь в местное управление Пенсионного фонда.

**- Как быть, если льготник не в состоянии подать заявление лично?**

- Можно послать заявление по почте заказным письмом либо передать его нарочным. Но в таком случае подпись заявителя должна быть заверена нотариусом или в порядке, установленном пунктом 3 статьи 185 Гражданского кодекса РФ – это предусмотрено Федеральным законом «О государственной социальной помощи» и приказом Минздравсоцразвития РФ о порядке осуществления ЕДВ. Если заявитель проходит лечение в военном госпитале, служит в армии, отбывает срок, находится в интернате, то заверить подпись могут начальники военно-лечебных госпиталей и исправительных учреждений, командиры военных частей, руководители социальных учреждений. Во всех остальных случаях необходимо обращаться к нотариусу.

**- Но если письмо не дойдет до 1 октября?**

- Главное, чтобы дата на штемпеле была не позднее 30 сентября. Заявления принимаются также не позднее этой даты.

# ТРИ СЕМЕРКИ

Народу уйма. Как бывает на вокзале, все куда-то спешат. А мне так хотелось узнать мнение людей про вчерашний, субботний счастливый день. Осмелилась и подошла к группе женщин.

***– Как думаете, вчера, в так называемый день Счастья, вы были счастливы? И в чем оно заключалось?***

– Ой, я была очень счастлива, и сейчас на небесах. Вчера встретилась с другом, которого потеряла три года назад. Кажись, мы помирились, – скороговоркой протараторила девушка.

– 7 июля мы с мужем ходили в лес, набрали так много черники, еле донесли. Сегодня продала сразу 4 бидона, заработала 1000 рублей. Да, я счастлива, теперь куплю внукам угощения, – отвечает женщина лет 50.

– Я из Вурнарского района, – представилась миловидная дама. – У нас вчера был дождь, такой тихий, мирный, летний. Сколько мы его ждали, и вчера, как по заказу, лил всю ночь. Не только я, а всей деревней мы приобрели настоящее счастье.

Да, и я согласна с этими мнениями. Женщины всегда пекутся не только о личном счастье, но и о чем-то другом, может быть, о счастье для всех... А что по этому поводу думают мужчины? Вопрос интересный... Направляюсь к ним.

***– Ну, как вчерашние три семерки? – спрашиваю я. Не успеваю завершить свой вопрос, как рот открывает молодой человек.***

– А что это? Портвейн, что ль? Я пью только водку, портвейн – брехня. А три семерки для женщин, может, сгодится.

Видимо, мой собеседник был после вчерашнего. И я толкую ему про счастливый день, про 07.07. 2007.

– А что? – продолжает он. – Счастье – это когда много друзей. Еще раньше говорили, не имей 100 рублей, а имей 100 друзей. Для меня это и есть счастье. Вчера был на свадьбе, вернее, на свадьбах, троих моих друзей. Скоро сам женюсь.

Нас слышал старик, который стоял рядом с нами, и сам захотел поразмышлять на эту тему.

– Мне уже 80 лет. Слава богу, жив, здоров. Молодые люди, счастье – это когда тебя понимают. Когда есть согласие, будет все: и благополучие в семье, и мир на земле, и деньги, и любовь, и человечность в каждом... Ведь все несчастье наше от того, я так думаю, что мы часто не понимаем друг друга...

Тут объявили посадку, и я рассталась с друзьями «по счастью». А приехав домой, чтобы «увековечить» счастье, постелила скатерть с рисунком 777.

Дорогой читатель, согласись, ведь счастье – это просто.

***Р. ЕВГРАФОВА.***

ЗА БЕЗОПАСНОСТЬ ДВИЖЕНИЯ

# СИТУАЦИЯ НА ДОРОГАХ ОСТАЕТСЯ СЛОЖНОЙ

**За 6 месяцев текущего года на территории района зарегистрировано 10 дорожно-транспортных происшествий, при которых 3 человека погибли и 12 человек получили различные телесные повреждения. По сравнению с соответствующим периодом прошлого года количество ДТП сократилось на 10 процентов, число пострадавших осталось на том же уровне. В 2006 году за отчетный период погибших в авариях не было.**

**В этом году в районе дорожно-транспортных происшествий с участием детей не зарегистрировано. Наметилась некоторая стабилизация и по происшествиям, совершенным водителями в состоянии алкогольного опьянения.**

Анализ дорожно-транспортных происшествий выглядит таким образом: наиболее распространенными причинами дорожных бедствий явились: повышение установленной скорости, нарушение правил на пешеходном переходе, неисправное транспортное средство, несоблюдение дистанции. По вине водителей совершено 7 аварий, при которых 2 человека погибли, 10 ранены. Много ДТП происходит в вечернее время (с 16 до 20 часов) по месту совершения – на автодорогах Ибреси – Алатырь и Новое Чурашево – Новые Высли, на этих участках ситуация остается сложной.

Аварии часто происходят в населенных пунктах по причине невнимательности и неграмотности пешеходов. По их вине было 3 несчастных случая, в которых погиб 1 человек и двое получили травмы. Выявлены 19 нарушений, совершивших пешеходами (в прошлом году было всего 5). Иногда на дорогах или улицах встречаются дерзкие пешеходы, которые не стесняются нарушать порядок. Такая безрассудная бравада добром не кончается.

Об этом не раз говорили, что наказание за вождение транспорта в нетрезвом состоянии стало строже, но почему-то слишком медленно идет сокращение количества нетрезвых водителей. Данные за первые шесть месяцев текущего года особой радости не вызывают. За полугодие задержан 41 нетрезвый водитель (за аналогичный период прошлого года – 58). Кроме этого 35 водителей отказались от медицинского освидетельствования. Прощения им все равно не будет. Дела все переданы в суд. А там – самое минимальное наказание – лишение водительских прав на срок полтора года. На сей раз мы решили назвать их по именам.

Сергеев М. С. (д. Айбечи) лишен на 19 месяцев.

Николаев В. Н. (г. Чебоксары) – на 18 месяцев.

Степанов Е. Н. (п. Ибреси, ул. Энгельса) – на 18 месяцев.

Ильин А. В. (д. Н. Абакасы) – на 19 месяцев.

Кондратьев М. А. (п. Ибреси, ул. Кооперативная) – на 18 месяцев.

Грибов А. П. (Чебоксарский район) – на 18 месяцев.

Николаев А. Н. (п. Огонек) – на 18 месяцев.

Хайртдинов И. Р. (п. Буинск) – на 18 месяцев.

Иванов А. И. (п. Новая Жизнь) – на 18 месяцев.

Трунин Д. С. (п. Ибреси, ул. Комарова) – на 18 месяцев.

Иванов О. А. (д. Нижнее Кляшево) – на 19 месяцев.

Казаков Л. Н. (п. Ибреси, ул. Юбилейная) – на 24 месяца.

Григорьев В. А. (п. Ибреси, ул. Куйбышева) – на 18 месяцев.

Назаркин С. Н. (с. Климово)– на 18 месяцев.

Макаров Л. А. (д. Верхнее Кляшево) – на 19 месяцев.

Сапожников Д. А. (п. Ибреси, ул. Калинина) – на 19 месяцев.

Абросимов С. Н. (Комсомольский р-н) – на 18 месяцев.

Долгов С. В. (с. Новое Чурашево) – на 18 месяцев.

Григорьев С. Н. (п. Бугуян) – на 18 месяцев.

Емельянов Ю. В. (п. Ибреси, ул. Пушкина) – на 18 месяцев.

Хайретдинов Р. Т. (п. Буинск) – на 18 месяцев.

Сидоркин Е. В. (п. Ибреси, ул. Мира) – на 18 месяцев.

Ильин Л. П. (п. Ибреси, ул. Крупская) – на 18 месяцев.

Константинов И. С. (п. Ибреси, ул. СХТ) – на 19 месяцев.

Кузюков Д. Н. (с. Хормалы) – на 18 месяцев.

Григорьев Л. Н. (с. Чуваш-Тимяши) – на 18 месяцев.

Васильев О. И. (д. Большие Абакасы) – на 18 месяцев.

Данилов Ю. В. (с. Новое Чурашево) – на 18 месяцев.

Хамдеев И. М. (п. Буинск) – на 19 месяцев.

Алексеев В. М. (п. Ибреси, ул. Горького) – на 18 месяцев.

Керимов В. А. (с. Хормалы) – на 18 месяцев.

Сабитов А. М. (п. Ибреси, ул. Леспромхозная) – на 18 месяцев.

Иванов Ю. Г. (Моргаушский район) – на 18 месяцев.

Орлов Н. И. (п. Ибреси, ул. Куйбышева) – на 18 месяцев.

Фролов В. В. (с. Чуваш-Тимяши) – на 18 месяцев.

Семенов Д. И. (д. Верхнее Кляшево) – на 18 месяцев.

Николаев Б. И. (п. Бугуян) – на 18 месяцев.

Николаев Н. И. (с. Чуваш-Тимяши) – на 18 месяцев.

Макаров С. О. (п. Ибреси, ул. Пушкина) – на 24 месяца.

Школьников В. В. (д. Айбечи) – на 18 месяцев.

Васильев О. Ф. (д. Хом. – Батырево) – на 24 месяца.

Федоров А. Н. (п. Буинск) – на 18 месяцев.

Петров Н. Г. (с. Климово) – на 24 месяца.

Игнатьев В. Л. (п. Березовка) – на 18 месяцев.

Кириллов С. А. (с. Хормалы) – на 18 месяцев.

Яруков А. П. (с. М. Кармалы) – на 24 месяца.

Карзанов В. А. (п. Буинск) – на 18 месяцев.

Константинов И. С. (п. Ибреси) – на 19 месяцев.

Ильин А. П. (п. Ибреси) – на 18 месяцев.

Сидоркин Е. В. (п. Ибреси) – на 18 месяцев.

Фомин В. Ю. (д. Большие Абакасы) – на 18 месяцев.

Удивительно, что некоторые «лишенные» водители наглым образом садятся за руль в состоянии алкогольного опьянения и создают для себя проблемы. Согласно решению суда до истечения срока, например, в течении полгода, они не должны управлять транспортным средством. В начале июня текущего года сотрудниками ГИБДД задержан С. А. Кириллов из с. Хормалы, который без водительского удостоверения выехал на автодорогу на своем транспорте. Он, оказывается, за управление автомобилем в пьяном виде был лишен права управления транспортными средствами на срок 18 месяцев. На сей раз по решению суда ему пришлось «раскошелиться» на 1500 рублей. А другому дерзкому водителю из с. Климово надолго придется распрощаться с водительским удостоверением. Петров Н. Г. в течение 2-х лет два раза задержан в пьяном виде за рулем, и в мае этого года он попался в список лишенных права управления транспортом на срок 24 месяца. Он такое наказание получил и в 2005 году.

Уважаемые граждане, если вы увидите кого-нибудь из лишенных прав водителей за рулем транспортного средства, сообщите в отделение ГИБДД (тел.: 2-11-82) или в дежурную часть ОВД.

Профилактические мероприятия проводятся нами регулярно согласно графику. За истекший период проверены 25 автотранспортных парков при выпуске на линию транспортных средств, а семь парков при возвращении в гараж, при которых выявлены немало нарушений. Виновные должностные лица были привлечены к административной ответственности.

Надо отметить, что госавтоинспекторы стараются не только ради порядка на дорогах, но и ради безопасности всего общества. За 6 месяцев они выявили всего 817 нарушений правил дорожного движения. Чтоб на дорогах была дисциплина и царила безопасность, необходимо всем принимать активное участие в профилактических мероприятиях, это поможет предотвратить несчастье и тяжелые потери. А водителям и пешеходам следует помнить, что воздержание от лихачества, пьянства и расхлябанности помогут доехать или добраться до назначенного места целыми и невредимыми, без нежелательных приключений.

***В. АНДРЕЕВ,***
***начальник отделения ГИБДД ОВД по Ибресинскому району.***

# ПОКАЗАТЕЛИ ПО ПОЛУЧЕНИЮ ПРИВЕСА КРС

| Ф.И.О | Валовый привес молодняка, кг. | Ф.И.О |
|---|---|---|
| **ЗАО «Агрофирма «Ибресинская»** | | |
| Сидоров В.И. | 3949 | |
| **ИТОГО по хозяйству** | | |
| **Колхоз им. Ильича** | | |
| Андреев К.В. | 3805 | Пашков В.Ф. |
| Гаврилова Н.С. | 2907 | Пашкова Ф. А. |
| Антонова З.И. | 3805 | Павлов В.А. |
| Гаврилова И.Н. | 3805 | |
| Антонова Л.И. | 3805 | |
| **ИТОГО по хозяйству** | | |
| **Колхоз им. Кирова** | | |
| Алексеева Е.В. | 3594 | Ерилеев В.В. |
| Николаева А. | 550 | |
| **ИТОГО по хозяйству** | | |
| **СХПК им. Калинина** | | |
| Кириллова О. | 1738 | Денисов Н. |
| Потапова Г. | 1738 | |
| Денисова З. | 4485 | |
| Чернова С. | 2482 | |
| Ильина Г. | 2566 | |
| Гурьева Ю. | 2803 | |
| Сярмина Л. | 3520 | |
| Михайлова Н. | 2949 | |
| Семенов В. | 6277 | |
| Константинов А. | 956 | |
| Чугарова Р. | 1120 | |
| Катанов В. | 1190 | |
| Михеев В. | 604 | |
| Ильин А. | 599 | |
| Денисов Н. | 2120 | |
| **ИТОГО по хозяйству** | | |
| **Колхоз «Путиловка»** | | |

# КАК ОБЕСПЕЧИТЬ БЕЗОПАСНОСТЬ КВАРТИРЫ?

За 6 месяцев 2007 года на территории Ибресинского района совершено 6 квартирных краж. За аналогичный период прошлого года совершено 12 краж из квартир. В некоторых случаях кражи совершаются по вине самих жильцов.

Лучший способ обеспечить безопасность своей квартиры - это постановка квартиры на пульт сигнализации в отдел вневедомственной охраны. С июня месяца 2007 года в ОВД по Ибресинскому району действует филиал ФГУП «Охрана» МВД РФ по Чувашской Республике, который заключает договора и берет под охрану объекты физических и юридических лиц.

Также не стоит пренебрегать следующими способами безопасности, это:

· установка укрепленной двери,

· установка сложных запорных механизмов (замков),

· различные электронные замки.

Далее следует отметить, чем больше замков, тем лучше ваша безопасность.

Гражданам, живущим в квартирах, расположенных на последнем этаже, следует обратить внимание на усиление перекрытий воздуховода, балконных рам, а также установки решеток на окнах и на площадках с выходом на чердачные помещения.

Гражданам, живущим на первых этажах, рекомендуется установить решетки на окна.

Если вы надолго покидаете квартиру (отпуск), необходимо закрыть все окна, двери и решетки, если они у вас установлены. Покидая на несколько минут жилье, также рекомендуется закрывать дверь, даже если вы вышли выбросить мусор или получать почту. Будет хорошо, если есть отдельная дверь от лестничной площадки.

Желательно поддерживать хорошие отношения с соседями, т.к. они могут уберечь вас от квартирной кражи, пока вы находитесь в отпуске или длительной командировке.

Если вы уезжаете в длительный отпуск, то ваши сбережения и ценности лучше хранить в безопасных местах, таких, как камеры хранения в различных банках города.

**ШТАБ ОВД ПО ИБРЕСИНСКОМУ РАЙОНУ.**

ÇЫН ТАТА УНĂН ĔÇĔ

# ÇУТĂ ĔМĔТПЕ ХАВХАЛАНСА

«Сывă пурăннă чухне кун та çĕр иртни те сисĕнмест: кун иртет, çĕр килет, çу хыççăн кĕр кĕрлесе килет. Хăш вăхăтра çакăн чухлĕ çул тума ĕлкĕртĕмши вара?» – тĕлĕнет Николай Иванов.

Эпĕ, калаçса ларас шутпа, ун патне килне кайрăм. Николай кашни ирех юратнă лашине кӳлет те, ферма çулĕпе Патман вăрманĕ хĕрринче вырнаçнă фермăнаваскать. Çамрăк пăрусене пăхать вăл. «Çакăнта эпĕ яланах ырă кăмăлпа ĕçе килетĕп. Тăван тавралăх илемĕпе киленсе йăпанма мана аттех вĕрентнĕччĕ», – калаçать тараватлăн ял çынни. «Атте вăкăрсем самăртнă çĕрте ĕçлетчĕ. Эпĕ те ача чухне унпа пĕрле çӳренĕ, хушăран ăна пулăшкаланă та». Коля ферма çулне такăрлама тытăннăранпа кĕçех çирĕм çул çитет. «Пĕр вăхăтра пăрахса та пăхрăм пăрусем патĕнчен. Темшĕн ферма ĕçĕшĕн чун тунсăхлама пуçларĕ. Нумай пурăнаймарăм çапла. Каллех ферма ĕçне кӳлĕнтĕм», – лăпкăн калаçрĕ выльăх-чĕрлĕх пăхакан. Килĕнче те канăç çук унăн, ĕçе тухса утиччен картиш тулли выльăх-чĕрлĕхне тăрантармалла-çке. Мăшăрĕпе, Нина Никифоровнăпа килти хушма хуçалăха тивĕçлипех тытса пыраççĕ.

«Патман» ял хуçалăх кооперативĕн утăмĕсем ăнăçлă пулса тухни унăн ертӳçинчен, В. Никифоровран нумай килет. Çынсемпе пĕр чĕлхе тупса ĕçлеме пĕлет Владимир Куприянович. Кооператив 2006 çулта кашни ĕнерен 4132 килограмм сĕт суса илнĕ. Районти чи лайăх кăтарту. Пăрусен вăтам ӳт хушаслăхĕ те 519 грампа танлашнă. Ку енĕпе те районта пĕрремĕш вырăн йышăнаççĕ вĕсем. Çак çитĕнӳсенче, паллах, Николай Маркелович Ивановăн тӳпи калама çук пысăк. Эпир унăн хушаматне районти малта пыракан ферма ĕçченĕсен хушшинче куратпăр. Акă, кăçалхи 5 уйăхра вăл хăй пăхнă выльăхсене пĕтĕмпе 2705 килограмм таран самăртма пултарнă. Ĕçчене – чыс-сум. Çĕнтерӳçĕ çав кăтартушăн 2 пин тенкĕ премие тивĕçрĕ. «Ĕмĕтсем тата та çутăрах, – тет маяк. – Çӳлтисем эпир ĕçленине хисепе хураççĕ пулсан, ăшчик усă кăмăлпа тулать, ытларах ӳсĕмсем тăвас килет», – савăккăн пĕлтерет вăл.

***Василий ЧЕРНОВ.***

ПРЕЗИДЕНТ СТИПЕНДИАЧĔ



**«Патман» ЯХПК механизаторĕ Владимир Павлов – Чăваш Президенчĕ çирĕплетнĕ çамрăксен ятарлă премийĕн стипендиачĕ. Вăл çак хисепе ял хуçалăхĕнчи хастарлă ĕçшĕн тивĕçнĕ.**

**Механизатор кăçалхи çуракинче те тăрăшуллă пулчĕ. Ăна ĕçе хăвăрт тата пахалăхлă тунăшăн хисеплеççĕ ял-йышра.**

***Д. ДИМИТРИЕВ сăнӳкерчĕкĕ.***

# ЯЛТА КИЧЕМ МАР

Пĕчĕк Упакасси ялĕнчи культура çурчĕ вырăнти библиотекăпа пĕрле çак кунсенче спорт уявĕ йĕркелерĕ. Людмила Павлова библиотекарь малтанах «Спорт – пирĕн пурнăç» темăпа калаçу ирттерчĕ. Пухăннисене хамăр ялта тĕслĕх библиотека уçнă чухне ӳкернĕ видеофильмпа паллаштартăмăр.

Спорт уявĕ Культура çурчĕ çывăхĕнче пуçланчĕ. Ăна «Виççĕн» ташă ушкăнĕ уçрĕ. Çакăн хыççăн уяв ял варринчи «Шурут» тесе ят панă вырăна куçрĕ.

Тĕрлĕ çулсенчи çынсем 60, 100 метра ăмăртса чупрĕç. Пурне те парнесемпе чысларăмăр. 2-3 çулхи ачасем вара амăшĕсемпе пĕрле старта тăчĕç. Футбол уйĕнче çивĕч тупăшу пычĕ. Ленин тата Советски урамĕсен командисем пĕр-пĕрин хушшинче ăмăртрĕç.

Çăмартана çĕмĕрмесĕр алă çине хурса чупни чи кăсăкки пулчĕ. Кунта Советски урамĕн команди çĕнтерчĕ. Анастасия Павлова, Александр Борисов, Татьяна Борисова студенткăсемпе çу кунĕсенче тĕрлĕ çĕртен яла канма килнĕ хăнасем уйрăмах палăрчĕç. Вĕсен хушшинче Маша Павлована, Денис Сергеева, Таня Яковлевана палăртма пулать. Вĕрен туртассипе те тупăшрĕç. Пĕтĕмлетсен, туслăх çĕнтерчĕ.

Уяв волейбол вăййипе вĕçленчĕ. Ленин урамĕнчи çамрăксем маттур пулчĕç. Пурне те призсемпе чысларĕç. Пысăк Упакасси ял тăрăхĕн администрацийĕ, Юрий Федоров предприниматель, ял тăрăхĕн çамрăксемпе ĕçлекен специалисчĕ Марина Кудрявцева, Пĕчĕк Упакассинчи культура çурчĕн директорĕ Эльвира Еразумова спонсорсен ыркăмăллăхĕпе иртрĕ çак уяв.

Ял çиййĕн каçченех хаваслă кĕвĕсем юхса шăранчĕç...

***Л. ИВАНОВА.***

ЖУРНАЛИСТ ШУХĂШĔ

# ĂÇТА-ШИ ПИРĔН ПĔРЕКЕТЛĔХ?

**...Çак кунсенче Йĕпреç вăрманĕсем йышлă çын шавĕпе тулнă. Çырла тапхăрĕ çитнин палли ку. Ирпе ирех çынсем çырлаллă вырăнсене çул тытнине курма пулать. Вĕсен хушшинче, паллах, йĕпреççем ытларах ĕнтĕ. Анчах та вĕсенчен ытти çĕртен çăмăл машинăсемпе килекенсем те юласшăн мар. Çакăн пек транспорт пурри питех те меллĕ çав: икĕ канмалли кунра унпа йĕри-тавралла çаврăнма пулать. Çутçанталăк ырлăхне тат та тат кăна. Ӳркев çеç ан илентĕр хăвна. Хальхи вăхăтра, ман шутпа, çăмăл машина хуçи пирĕн вăрмансен тивлечĕпе ытларах та усă курнă пек туйăнать.**

**Пирĕн район çĕрĕ çинчи вăрмансенче хăмла çырли те, çĕр çырли те, хура çырла та пур. Кĕркунне кăмпапа савăнтараççĕ вĕсем. Кунсăр пуçне – техĕмлĕ сывлăш, янкăр хĕвел, тулăх шывлă пĕве-кӳлĕ...**

Эпĕ мĕншĕн çыратăпха çак йĕркесене? Кун пирки пурте пĕлеççĕ-çке. Мана хама акă мĕн пăшăрхантарать: ютран килекенсем, ку тăрăх пуянлăх-тивлетне хушассишĕн хăйсенчен пĕр чĕптĕм те вăйхал хушманскерсем, Турă кӳнĕ ырлăхпа ытла та тирпейсĕр усă кураççĕ. Манăн вĕсене купăста пахчине килсе лекнĕ качакапа (куншăн вулакан каçартăр) танлаштарас килет. Ырлăх тĕлне килсе тухрăн тăк, нимĕн юлмиччен тат та çи, тепĕр хутĕнче çак «турам» лекмесен те пултарать-иç! Акă мĕншĕн çырлалăх вырăнĕсем çултан çул чухăнланса-çаралса пыраççĕ. Эккей, çырлана тымарĕ-мĕнĕпех тăпăлтарса илетпĕр-çке. Ыттисем валли хăварасси асра та çук. Çитес çул ку вырăнта мĕн шăтса тухĕ? Кунпа кăна вĕçленмест-ха вăрманта уçăлса çӳрени. Куçпуçа чарса сăнамасăрах мĕн асăрхатăн? Таçта та – çăмăл машина йĕррисем, çу пăнчисем, чĕртнĕ кăвайтран юлнă «саплăк», тĕрлĕ ăпăр-тапăр: çӳп-çап, хут татăкĕ, полиэтилен хутаççем... Кирек ăçта куç ывăтсан та – тасамарлăх, тирпейсĕрлĕх, хуçасăрлăх. Кун пек çĕрте вăрман «çимĕçĕ» ӳлĕмрен ытлă-çитлĕ хунасси иккĕленӳллĕ. Вăрман еннелле хывăннă çулпа пынă чухне çăмăл машина хуçи тырă пуссине те, улăхçарана та таптать, çапла майпа çутçанталăк ырлăхне, çын аллине тăвакан пурлăха таптать, сиен кӳрет.

Çав çитменлĕхсене мĕнле йышăнатпăр-ха эпир, ку тăрăхра ялан пурăнакансем? Ниме́нле те. Пирĕншĕн ку – ик айкки те тăвайкки. Тен, çавăншăн «айăпли» пирĕн чун-чĕресенче тахçанах çирĕпленнĕ çак киревсĕр шухăш: «Ара, таптаччăр-иç, вăл – пирĕн мар вĕт, патшалăхăн!» Пĕрлехи йышпа тунă ĕç-хĕлшĕн яваплă пулса тăрасси ытлашшиех канăç памасть пире. Хальлĕхе Йĕпреç вăрманĕсенче турбазăсем çуккишĕн савăнас та килет. Канмалли кунсенче кăна хула çыннисем пысăк ушкăнпа йăтăнса килеççĕ. Вĕсем хыççăн мĕнле те пулин йĕр юлатех. Йĕрсĕр нимĕн те çухалмасть. Кайран, «тӳнтерле» ӳкерчĕксене куратăн та: «Эпир мĕншĕн халăх пуянлăхĕпе тирпейлĕ те перекетлĕ усă курма пĕлместпĕр?» ыйту не кĕрсе çитет. Унран йывăр хăтăлма кайран. Пирĕн аттесемпе аннесем ун пек пулман-çке, вĕренмен пулсассăн та, вĕсем çутçанталăк ырлăхне хушса пыма пĕлнĕ.

...Манăн тахçанхи пĕлĕшĕм Николай Николаевич, вăрмана чунтан юратаканскер, çапла калаçа парать: «Çутçанталăк ытамне чăтăмсăрлăх илсе тухать мана. Эпĕ ешĕл чатăрпа витĕннĕ хурăнлăха çĕкленӳллĕ кăмăл-туйăмпа пырса кĕретĕп: кĕçех куç тĕлне капăр шлепкеллĕ кăмпасем тухса ларĕç, тетĕп. Асăрхарăм тăк, вĕсем патне васкамасăр пырса тăратăп, килениччен тавралăха сăнатăп, кăмпасене алăпа ачашлатăп. Вĕсене тăпăлтармастăп, туни вĕçĕнчен çĕçĕпе касса илетĕп. Вăрман сывлăшне кăкăр тулли çăтнă хыççăн кăна киле илсе каякан сукмак çине тухатăп...

Ку пĕлтĕр пулнă. Кăçал та çав вырăнах çул тытрăм. Кĕтни кăлăхах. Шăна кăмпи, тислĕк кăмпи çеç курнăçланса лараççĕ.

Канăç памасăр пуçа «пăралама» пуçлать.

Анчах та вăрмана çул тытакан пур çынна та пĕр виçепе виççе хаклама çук. Вĕсен хушшинче хăйсене чăн-чăн çынлăха тĕпе хурса çӳрекенсене курма пулать. Ватасси, таптасси, хуçасси, çĕмĕресси çинчен шухăшламаççĕ те вĕсем.

Типтерлĕх... Вăл паян çав тери кирлĕ. Анчах та темшĕн-çке ăна хисеплеменни малти вырăна тухса тăрать, пăсăк ен йĕрке-усăллисем çук та çук. Ирттерех мар-ши? Ыран е виçмине шăтса тухмаллах вĕсем. Çак шухăшпа йăпанса, пуш карçынккапах таврăнатăп киле...»

Николай Николаевич паянхипе ĕнерхи вăрман хушшинче пысăк уйрăмлăхсем курни çинчен каларĕ. Вĕсенчен пĕри – вăрман пуянлăхĕ майĕпен-майĕпен чакса пыни. Унччен мĕнлерех пуянччĕ пирĕн тăрăх! Халĕ кăмпана çавапа çулмалли вырăнсене кăнтăрла хунарпа шырасан та тупаймăн. Чĕркуçленсе ларса çырла татмалли уçланкăсем те çукпа пĕрех. Çутçанталăк хăйĕнпе шелсĕррĕн калаçакансене çав меслетпех тавăрать çав. Эпир вара темшĕн кун пирки тарăннăн шухăшлама ăс-хал çитерейместпĕр. Карçынккасене, бидонсене хăвăртрах тултарас тесе, темĕнле меслетпе те усă куратпăр мар-и? Хăшĕсене тата «укçа чирне» кайни куçĕсене суккăрлатать.

...Уçланкăра, хырсемпе хурăнсем çавăрса илнĕ лапамра, хăтлă вырăн пур. Эпĕ кунта кĕтмел те, хура çырла та татнă, хĕп-хĕрлĕ хурăн çырлине те пуракĕпуракĕпех пуçтарнă. Кăмпасăр таврăнман ку вырăнтан. Эмел куракĕсем те йышлăччĕ кунта. Халĕ вара вĕсенчен пĕри те çук. Пĕшкĕне-пĕшкĕне шырасан та, нимĕн те тупаймăн. Ирĕксĕрех çакăн пек шухăш пырса кĕрет пуçа: çĕр-аннемĕр хăйĕн пархатарне виçеллĕн тыттарать çынна. Хапсăнчăк пулмалла мар. Атьăр-ха, ырă çыннăмăрсем, хăйĕн ытарайми илемĕпе кăчăк туртса чĕнекен «симĕс патшалăха» савăк кăмăлтуйăмпа кăна çул тытар. Ырă тунине ырăпах тавăрма тивĕçлĕ вăрман.

***Геннадий КУЗНЕЦОВ.***

ПАЯНХИ КУН ЫЙТĂВĔ

# КУ – ЧĔНӲ МАР, ВĂХĂТ ХИСТЕВĔ

**Патшалăхăн асăрхав инспекторĕшĕн чи «хĕрӳ» тапхăр хăçан-ши? Эпĕ панă ыйтăва хуравланă май, патшалăхăн тĕп инженерĕ – асăннă инспекци пуçлăхĕ Валерий Феофанович Гаврилов çапла пĕлтерчĕ: «Тракторсене, хăй тĕллĕн çӳрекен ытти машинăсемпе вĕсен прицепĕсене техника енчен тĕрĕслемелли вăхăт çитсен...»**

Йăлана кĕнĕ йĕркепе коллективлă хуçалăхсенче çав тапхăр пуш-ака уйăхĕсене лекет. Анчах та юлашки çулсенче техника тĕрĕслевĕн вахăтне каярах куçарса пыма тытăнни палăрать. Мĕншĕн? Ара, хĕлле чылай хуçалăхри юсав мастерскойĕсене хутса ăшăтмаççĕ, çавна май вĕсенче ĕçлеме тивĕçлĕ условисем çук. Çакă вара йăлана кĕрсе çирĕпленет: инспекцири ятарлă çынсем тĕрĕслев ирттерме пыраççĕ, хуçалăхсенче хатĕр мар, вĕсенче хĕрсех çуракине хутшăнакан техникăна юсаççĕ. Васкамалла, хыпăнмалла пулса тухать. Юсавçăпа механизаторăн та пĕр тĕллев: агрегата хăвăртрах уй-хире кăлармалла тăвасси. Паллах, кунашкал лару-тăрура пахалăх çинчен сăмах хускатни те кăлăхах.

Тĕрĕсех палăртать Валерий Феофанович: «Хуçалăхсен ертӳçисен темшĕн те явап тытма тивет. Анчах та эпĕ техникăна тĕрĕслева вăхăтра хатĕрлесе лартманшăн вĕсенчен çирĕп ыйтнине пĕрре те ас тумастăп».

Кун пирки, чăнах та, район ертӳçисен тата ял хуçалăх пайĕн яваплă çыннисен тарăнраххăн шухăшласа пăхмаллах.

Пирĕн районти уйрăм хуçалăхсем машинатрактор паркĕсенчи техникăна çулталăкри тĕрĕслев витĕр кăларасси çине тивĕçлипе çаврăнса пăхмаççĕ, çавăншăн никам та явап тыттарманнине лайăх пĕлеççĕ вĕсем. Специалистсем çинчен калаçнă май, çак тĕслĕх умĕнчен те куçа хупса ирттейместпĕр: чылай çĕрте тĕп инженерсем те çук. Кунпа ниепле те килĕшеймĕпĕр, мĕншĕн тесен ял хуçалăх производствипе инженери службине тивĕçтерсе тăни механизаторсен професси ăсталăхне ӳсме, çĕнĕ майсемпе меслетсене анлăрах çул пама, çапла вара ĕçре палăрăмлă ырă улшăнусем тума пулăшĕччĕ. Апла тăк ку ыйтăва кун йĕркинчех тытни кирлĕ. Çапла тусан кăна «АПК аталанăвĕ» наци проектне пурнăçа кĕртесси калкалрах пулса пыма тытăнĕ.

Çакă та вăрттăнлăх пулма пăрахрĕ ĕнтĕ, халĕ ялсемпе поселоксенче тĕрлĕ йышши техникăпа усă куракансен йышĕ çултан çул ӳссе пырать. Транспорт тытакан уйрăм çынсем пысăк пĕлтерĕшлĕ мероприятие – техника тĕрĕслевне тивĕçлĕ шайра ирттерессипе çыхăннă ыйтăва хакламаççĕ теме çук. Кăçалхи тĕрĕслев Энтриел, Пучинке, Хурамал, Кирово, Чăваш Тимеш ял тăрăхĕсенче тивĕçлĕ шайра иртрĕ.

Статистика çирĕплетнĕ тăрăх, 2007 çулхи утă уйăхĕ вĕçленнĕ тĕле пирĕн районта хăй тĕллĕн çӳрекен тĕрлĕ транспорт 320 единица шутланнă. Шел, вĕсенчен çурри кăна тĕрĕслеве хутшăннă. Ку ĕçе Пысăк Упакасси, Березовка ял тата Йĕпреç хула тăрăхĕсенче çав тери çителĕксĕр йĕркелерĕç.

Уйрăм çынсем тытакан машинăсен тĕрĕслевне ирттермелли вăхăта 2007 çулхи çурла уйăхĕн 31-мĕшĕччен тăснă. «Çак тĕрĕслев вăл ячĕшĕн кăна йĕркелекен ĕç» тесе шухăшлама кирлĕ мар. «Унсăрах пурăнма пулать» теççĕ хăшĕсем. Анчах та юсавсăр техникăпа çула тухни мĕн патне илсе çитернине çирĕплетекен тĕслĕхсене те тăтăшах курса тăратпăр-çке.

Транспорт тытакан хăш-пĕр çынсем асăрхав инспекцийĕн инспекторне «чăрмантаракан» çын вырăнĕнче курса тăраççĕ. «Çав çын пулмасан та эпир чиперех ĕçлемелле» текен шухăшпа «йăпанаççĕ» ун пеккисем. Инспекци çыннисен вара çавăн йышшисемпе те ăнлантару ĕçне тума тивет. «Эпир пĕрлехи йышпа кирлĕ ĕç тăватпăр, – тет Валерий Феофанович. – Çынсем инкек ан курччăр, юсавлă техникăпа кăна çула тухчăр, хăрушлăх йĕркине пăхăнса тăччăр тесен, çак ĕçре нимĕнле вак-тĕвек те пулмалла мар».

Кĕçех – вырма. Хĕрӳ тапхăра пур енĕпе те тĕплĕн хатĕрленсе çитмелле. Патшалăхăн асăрхав инспекцийĕ район администрацийĕн ял хуçалăх пайĕпе пĕрле тĕштырă пухса кĕртмелли комбайнсене тĕрĕслемелли график турĕç. Пирĕн районти хуçалăхсенче паянхи куна 53 комбайн шутра. Вĕсен йышĕ те çултан çулах чакать.

Паянхи куна 2 агрегата тĕрĕслеврен кăларнă. Вĕсем «Красный фронтовик» тата Калинин ячĕллĕ хуçалăхсенче нумай çул ӳсекен куракĕсене пухса кĕртеççĕ.

Хуçалăхсен тата инженерипе техника службисен ертӳçисен шухăшкăмăлне тивĕçтерсе, юлашкинчен комбайнсен тĕрĕслевĕн графикне илсе кăтартăпăр: «Искра» к-з – 20.07, «Красный фронтовик» – 23.07, Ленин ячĕллĕ, «Патман» – 24.07, «Рассвет» АУО – 25.07, Калинин ячĕллĕ ЯХПК, «Красный партизан» – 26.07, Ильич ячĕллĕ – 28.07, «Ибресинская» агрофирма – 1.08, «Трудовик», «Путиловка» – 2.08, «Колос» ЯХПК, «Заря» – 3.08.

Çу кунĕсем – ялти чи хĕрӳ вăхăт. Ыранхи кун пурлăх-пуянлăхĕ шăпах халĕ пуçтарăнать. Тырпул ăстисене çак ăнлану вăй-халпа шанăç парса тăма тивĕç те. «Хĕрӳ тапхăра – пĕтĕм вырма техникине – хатĕррисен ретне!» Ку вăл – чĕнӳ мар, вăхăт хистевĕ.

***Геннадий КУЗНЕЦОВ.***

КĂМĂЛ-СИПЕТ

# ШУРĂ СИРЕНЬ

Çурхи кун ăшшипе киленсе,
Таса хĕр шур пĕркенчĕк пĕркеннĕн
Ак, ларать чечекре шур сирень,
Таврана тутлă шăршă сарса...

Çу уйăхĕн ытармалла мар хитре вăхăтĕнче, шăматкун каçхине клуба çамрăксем чылаййăн пуçтарăннă. Ташă пуçланман-ха. Хĕрсемпе каччăсем, ушкăнăн-ушкăнăн пуçтарăнса тăнă та, тем çинчен калаçаççĕ, шӳтлеççĕ, кулаççĕ. Иринăпа Катя та, пĕр-пĕрне тахçантанпах курманскерсем, кăмăллăн сăмахласа тăраççĕ. Çав вăхăтра клуба салтакран тин çеç курма килнĕ Ванюшпа унăн тусĕсем килсе кĕчĕç. Залри çамрăксем çавăнтах шăпланчĕç, халь çеç кĕнисем çине тинкерчĕç. Салтак, сывлăх сунса, пурне те алă парса тухрĕ. Ирина патне çитсен, темшĕн чылайрах тытăнса тăчĕ. Часах вальс кĕвви илтĕнсе кайрĕ. Çамрăксем мăшăрăн-мăшăрăн ташша тухрĕç. Ванюш та Иринăна ташлама тухмашкăн чĕнчĕ. Вĕсем, килĕшӳллĕн ярăнса, зал варне çитрĕç. Тĕреклĕ хулçурăмлă, пиçĕ сăн-питлĕ сержант. Иринăна çеç мар, ытти хĕрсене те килĕшрĕ пулас. Ирина хăй те яштака, илемлĕ пӳсиллĕ, сарă та вăрăм çӳçне лăс янă, кăнкăвак куçлă, салтакпа куçĕсем тĕл пулсан хĕр пичĕ хĕрелсе кайрĕ. Çакăн хыççăн вăл тата та чипертереххĕн курăнчĕ. Хĕр илемĕ каччă чĕрине тӳрех тыткăна илчĕ. Вальс çеммипе çаврăннă вăхăтра Ванюшăн çирĕп те ачаш ытамĕнче хăйне юмахри пек туйрĕ Ирина. Хăйсем çине ыттисем ăмсанса пăхнине асăрхамарĕç те вĕсем. Илемлĕ кĕвĕ çеммипе, юлнă евĕр, çаврăнчĕç. Вĕсем çавăн пек илĕртӳллĕ ташласа çаврăннине чылай мăшăр чарăнса тăрса пăхрĕç. Хĕрпе каччă иккĕшĕ çеç пӳлĕм варринче çаврăннине кайран тин асăрхарĕç. Пурте алă çупса ячĕç. Пĕр Соня кăна кĕвĕççе, тарăхса, ушкăн хыçне кайса тăчĕ. Малалла мĕн пулассине кăмăлсăррăн сăнарĕ. Ирина вăтаннине пытармарĕ, хĕрсем патне хыпаланса пырса тăчĕ. Ванюш урама уçăлма тухрĕ. Çав хушăра Соня та вĕлт çеç тухса çухалчĕ. Куçĕсене çиçтерсе, йĕкĕт çумне пырса тăчĕ. Ун тавра явкаланса, тем çинчен пакăлтатма пуçларĕ: хăй Мускавра ĕçлесе чылай укçа туни, хитре тумланма юратни çинчен сӳпĕлтетрĕ. Ирина вара студентка çеç-мĕн, ашшĕ-амăшĕн ĕнси çинче пурăнаканскер, чаплă çи-пуçпах çӳреймест имĕш. Ванюш Соня çине тĕлĕнсе пăхса тăчĕ те: «Эсĕ пуян хĕр, ху пек пуян йĕкĕт шыра», – терĕ те васкавлăн клуба кĕрсе кайрĕ. Унта çамрăксем çĕнĕ ташă пуçланă. Салтак Ирина патне хăюллăн утса пычĕ мăшăр çăмăллăн çаврăнма пуçларĕ. Ташă хыççăн вĕсем киленнелле те пĕрле утрĕç. Вĕсене Соня çиллес куçпа пăхса ăсатрĕ. Хĕрпе каччă çутăличченех пĕрле пулчĕç. Ванюш Иринăн аллине ачашшăн чăмăртаса тытрĕ те унăн куçĕсенчен ыйтуллăн пăхса: «Яланах санпа пĕрле пуласчĕ», – терĕ. Хĕр, унпа килĕшсе, пуçне тайса илчĕ, анчах унăн паян, кăнтăрла иртсен Шупашкара каймалла. Ыран вĕренмелли кун. Иккĕшĕ те ассăн сывласа ячĕç. Мĕншĕнха çапла ытла хăвăрт уйрăлмалла? Мĕнпурĕ те пĕр каç çеç пĕрле савăнчĕççке вĕсем. Ванюшăн тепĕр эрнерен çар чаçĕнче пулмалла. Хĕртен пĕрре те уйрăлас килмест унăн. Мĕн тăвăн? Уйрăлма вăхăт. Салтак хĕре ăшшăн ыталаса илсе, хĕрӳллĕн чуп турĕ.

Ирина амăшĕ хатĕрлесе панă кучченеçĕсене сумкине чикрĕ те, кăнтăрла иртсен автобус чарăнакан вырăна тухса утрĕ. Нумаях та кайманччĕ, тăкăрлăкра Ванюша курчĕ. Унăн аллинче шурă сирень чечекĕн çыххи. Йăл-йăл кулса, Иринăна чечек парнелерĕ, унтан унăн сумкине илсе, малалла утрĕç. Часах автобус килсе çитрĕ. Каччă Шупашкара икĕ билет туянчĕ. Вăл та хĕрпе пĕрле хулана каять иккен. Иккĕшĕ те савăнăçлăн юнашар вырнаçса ларчĕç, пĕр-пĕринпе ăшшăн шăкăлтатса калаçса пычĕç. Ирина Ванюшран çапакан вĕри хумлă туйăмпа телейлĕн çиçсе пычĕ. Каччă та савнийĕн тасалăхпа сăпайлăх асĕнче хаваслăн киленчĕ...

Ирина вĕренӳрен пушансан, иккĕшĕ тăван хула урамĕнче тепĕр икĕ каç уçăлса çӳрерĕç. Салтакăн каялла чаçе таврăнма вăхăт çывхарса пынăран яла кайса амăшне кăштах пулăшса хăвармалла иккен. Ирина каччине яла ăсатса ячĕ. Çыру çырма пулчĕ, кĕтме сăмах пачĕ. Ванюш та чаçе çитсенех çыру яратăп, терĕ.

Ывăлĕ амăшне чылай ĕç туса пулăшрĕ. Кивелсе çĕрĕшнĕ вутă сарайне, хӳмене юсарĕ. Вутă татса-çурса тирпейлерĕ. Ку ĕçре ăна куккăшĕпе кӳршĕ каччи Сантăр та пулăшрĕç. Ыран тухса каяс каç вĕсем патне çамрăксем çитрĕç. Салтака ăсатма вĕсем кучченеçпех килнĕ. Соня – шампань эрехĕ, каччăсем хаяртараххине илнĕ. Амăшĕ те сĕтел çине тутлă çимĕçсем: шăрттан, хуплу, кăпăклă сăра кăларса лартрĕ. Соня шампань эрехне ĕçме пуçласан юриех Ванюш аллинчи куркана ӳкерсе çĕмĕрчĕ. «Ку – телее», – терĕ. Пӳлĕме кĕрсе, урăх стакан илсе тухрĕ, эрех тултарса, салтака тыттарчĕ. Шавлă çамрăксем стакан тĕпĕнче пĕр япала пуррине асăрхаса та юлмарĕç. Соня вăр-вар, хитре сăмахсем каласа, каялла чипер çаврăнса килме ырă сунса, куркасене пушатма ыйтрĕ. Каярахпа хаяртараххине те тутанчĕç. Шавларĕç, кулчĕç, ташларĕç, унтан клуба кайма пуçтарăнчĕç. Ванюш нумай ĕçмен пулин те анаслама пуçларĕ, çывăрас килни çинчен пĕлтерчĕ. Çамрăксенчен каçару ыйтса, çенĕкри пӳлĕме кĕрсе юлчĕ.

Соня хăй шутланă пекех пулса пынине çав тери хĕпĕртерĕ. Çамрăксемпе клуба çитсенех, вĕсем сисиччен каялла тухса та шăвăнчĕ. Ванюшсем патне çитсен, пӳртре салтакăн куккăшĕпе инкĕшĕн сассине илтрĕ. Питĕ шăппăн каччă патне кĕрсе кайрĕ. Ванюш ним туйми çывăрать. Усал шухăшлă хĕр ăна салтăнтарчĕ, ним именмесĕр, ун çумне хăй те çарамасланса кĕрсе выртрĕ.

Ирхине амăшĕ ывăлне вăратас тесе тухрĕ те чутах тӳнсе каймарĕ. Унта çара çурăмлă хĕр Ванюша ыталаса выртать иккен. Иккĕшĕ те ним туйми çывăраççĕ. Амăшĕ Ванюша аран-аран силлесе вăратрĕ. Часах Сантăр та çитрĕ. Вăл салтака пуйăс çине лартса яма унпа пĕрлех каясшăн. Соня çынсен умĕнче пĕрре те вăтанма пĕлмерĕ. Вăл нихăçанхинчен хаваслă: ăна каччăпа çывăрнине çынсем курни паха. Хăй шухăшланине пурнăçларĕ-пурнăçларех вăл. Ванюш, вăрансан, пуçне икĕ аллипе ярса илчĕ. Халех çĕр тĕпне анса кайма хатĕр вăл. Тӳрех Ирина çинчен аса илчĕ. Вăл пĕлсен, мĕн калĕ? Ку Соньăн ухмахла спектаклĕ пулнине тавçăрма та пултараймарĕ.

Ванюш чаçе çитсен те часах лăпланаймарĕ. Хăйне хăй çĕнтерсе, епле пулсан та, çакăн çинчен юратакан хĕрне чăннине çырса пĕлтерме шутларĕ. Пĕрремĕш çырурах кун çинчен çырма çав тери йывăр пулчĕ. Çынсем урлă пĕличчен хăй тĕрĕссине каласан аванрах пуласса шанчĕ. Вăл çырăвне ăшă та юратуллă сăмахсемпе пуçларĕ. Савнă хĕрне çурхи чечекпе, шурă сиреньпе танлаштарчĕ, чĕринчен шăранса тухакан чи хаклă сăмахĕсемпе шăрçаларĕ. Çапла пулса тухнишĕн пĕтĕм чун-чĕререн каçару ыйтрĕ, пĕр ăна анчах юратнине тепĕр хут пĕлтерчĕ.

...Хĕр çак хыпара вуласа пĕлнĕ хыççăн чылайччен пĕр вырăна тĕллесе пăхса ларчĕ. Ванюш улталаманнине чĕрипе туйрĕ. Соня мĕнлерех хĕр пулнине ялта пурте пĕлеççĕ. Вăл темиçе каччă çумне те çапла çыпăçнă. Миçе хĕре тарăхтармарĕ пулĕ? Ирина каччи патне çырнă çырăвĕнче çав хыпар пирки нимĕн те шарламарĕ. Кĕскен хăй пурнăçĕ çинчен пĕлтерчĕ.

Тепĕр çур çултан Ванюш яла ялан лăхах таврăнчĕ те тӳрех Шупашкара вĕçтерчĕ. Вăл çитес çул аслă шкула вĕренме кĕрес тĕллевпе хатĕрлев курсне çырăнчĕ. Каç пуласпа университет патне савнине кĕтме кайрĕ. Унта ăнсăртран хăйĕн пĕлĕшне тĕл пулчĕ, малашнехи тĕллевсем пирки пĕлтерчĕ. Пĕлĕшĕ, пĕр фирмăра ĕçлекенскер, ăна ĕç тупса пама шантарчĕ.

Çак хыпарпа хаваслaннăскер, Ванюш, Иринăна курсан, тӳрех хĕр патне ыткăнчĕ. Ăна йăтса, пĕр вăхăт çаврăттарса илчĕ, хĕрӳллĕн чуп туса хĕрĕн куçĕсенчен тинкерчĕ. Ирина та юратнă каччисĕр тухсăнласа çитнĕрен ăна ыталаса илчĕ. Вĕсем, аллаллăн тытăнса утрĕç. Çак икĕ çамрăкăн таса та чăн-чăн юратăвне тăшманла хура ĕç аркатаймарĕ. Урăхла каласан, вăхăт вĕсен таса туйăмне тĕрĕслерĕ ĕнтĕ.

Тата тепĕр çур çултан, шурă сирень чечеке ларнă вăхăтра, юратакан икĕ чĕре пурнăç çулĕпе пĕрле утма тупа туса пĕрлешрĕç.

Юратма пĕлекенсем чăннипех те телейлĕ иккен.

***Н. СЕМЕНОВА.***

# ПĔЧĔК ЯЛĂН ПЫСĂК УЯВĔ

**/Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр./.**

тупăшрĕç. Волейбол лапамĕнче савккасем çĕнĕ кĕлĕмкассисемпе тата пучинкесемпе вăй виçрĕç. Кире пуканĕ çĕклерĕç. Каç пулттипе футболистсем те спорт тумĕ тăхăнчĕç. Пĕтĕмлетерех каласан, иртен пуçласа каçченех пĕчĕк ялăн сарлака урамĕнче вăйă-кулă, юрă-кĕвĕ, хаваслă шав илтĕнсе тăчĕç.

Çанталăк та çак куна кĕтсе тăнă тейĕн. Çу пуçланнăранпа та ку тăрăхра çумăр çуман пулнă. Халăх уяв вырăнне пуçтарăнса çитсе, ял тăрăхĕн пуçлăхĕ И. Я. Денисов парнесемпе грамотăсене валеçме тытăннăччĕ кăна, сасартăк тӳпене тачка пĕлĕтсем хупласа илчĕç те, витререн тăкнă пек çумăр çума пуçларĕ. Уяв вăхăтлăха чарăнчĕ...

Кăнтăрла иртсен каллех хĕвелĕн йăлтăр кулли таврана çупăрларĕ, çынсен кăмăлĕсене çĕнĕ савăнăç-телейпе çĕклерĕ.

Уяв йĕркелӳçисен ячĕпе ăшă сăмах нумай пулчĕ çав кун. Вĕсем чăннипех те тăрăшни куç умĕнчех: пĕве хĕрринче вырнаçнă вăрăм сĕтел хушшине ларса уявра пулнă кашни çынах техĕмлĕ шӳрпепе тата çăра чейпе сăйланчĕ.

– Ял çыннисен ячĕпе юбилей уявĕн хаваслăхне çĕклеме пулăшнă спонсорсене: «Чувашия – Поддержка» страхлакан компани представительне Елена Александрована, «Древстрой» ООО генеральнăй директорне Алексей Кузьмина, Йĕпреçри шкул-интернат директорне Николай Майорова, Зоя Магасева, Валерий Игнатьев, Сергейпа Александр Беловсем, Александр Иванов, Валерий Майоров предпринимательсене пысăк тав сăмахĕ калатпăр, – терĕ юлашкинчен Сергей Петрович.

Унăн сассинче иртнĕ уявпа кăмăллă юлнине çирĕплетекен шанăç туйăмĕ пурри сисĕнчĕ.

Савкка шанчăклăнах малалла пăхать. Унăн малашлăхĕ кирек мĕнле пулсассăн та, вăл çынсăр пĕр утăм та тăваяс çук. Çĕр çинче çирĕппĕн тăракансем пур чухне яла ыранхи кун çитмеллех.

***Геннадий КУЗНЕЦОВ.***

# ТЕВЕТКЕЛ ТĂВАН ТĂРĂХРА

## ЭССЕ

Гудронлă сывлăш йӳççине ӳпки-пĕверĕнчен
Тарăхнипе перет те кăларса кăра поэт
Пĕррехинче хĕвеллĕ е тĕтреллĕ ир çинче
Йĕпреç енне автобуспа йăр-яр тухса вĕçет.
Кунта ăна кĕтеççĕ тăвансем, çап-çут кĕтне,
Савкка пĕви хĕррипеле ташлан ват йăмрасем.
Ача чухне çак вырăнта çӳренĕ вăл кĕтсе
Ял-йышăн кĕтĕвне, чĕри ширанă юрăсем.
Мăн улăх çийĕн çĕкленен тĕтрен шур юххинче
Вун иккĕри кĕтӳç хăйне вуçех кичем туйман.
Амаланма пуçланă пуç мимин вучахĕнче
Поэзи çулăмĕ тасан – вăл пулмĕ графоман.
... Паян каллех ачалăх çулĕпе çӳрет поэт,
Кĕрсе тухать шĕшкĕлĕхпе кăтра хурăнлăха.
Çырла шăршиллĕ çил ăна шалтан шала чĕнет:
Вăл юмансен хаш-ш! кашлавне асаплăн тăнлĕ-ха.
Çук, илĕртмест халь хăнана шух шăпчăксен юрри,
Куккук çулсем шутланипе кăсăкланмасть темме.
Чĕр çутçанталăк куççульне тытать поэт чĕри, –
Çĕн тĕс кӳме пуçласшăн вăл шупкалнă илеме.
Хăйне сăпка сиктернĕ тăрăх умĕнчи
Мăн парăма çапла майпа татмашкăн шут тытни
Сăваплăран сăваплă ĕç. Вăл çынлăх ăшшинчи
Чи ырă-ырă туйăма ялкăштарса çутни.
Сократ пекех, çамки тирне пĕрсе илет поэт,
Çĕн йĕркесем, хĕлхемленсе, тухасшăн тул енне.
Мăкпа хупланнă ансăр çул ăна илсе кĕрет
Тункатасен вĕçне-хĕрне тухми уçланкине.
Çунтартăр вăл сӳнми таланчĕпе пĕр хĕрхенми
Çак сумсăр, симĕс пурлăха çаратакансене,
Килес ăру валли турат-хунав та хăварми
Ăшталанса, пĕр вĕçĕмсĕр аркатакансене.
Шур катанпир çине чечен эреш тĕрленнĕ пек,
Поэма кӳлепи майĕпенех пырать ӳссе.
Трагеди тăвăлне этем кунта ан ятăр тек –
Ăна Гомер кĕлеткипе лартсамччĕ эс пӳлсе.
Гидронлă сывлăш йӳççине ӳпкӳ-пĕверӳнтен
Тасатнă хыççăн çăмăлрах туймастăн-и хăвна!
Çунатланать хиствлĕ ăс. Тем анлăш чĕрӳнте
Черченкĕ хунавсен сасси салам ярать сана.

***Геннадий КУЗНЕЦОВ.***

# САЛАМЛАТПĂР

Хаклă аннене, юратнă кукамай-асаннене, хисеплĕ тăвана – Вăтаелĕнче пурăнакан **Юлия Васильевна ПЕТРОВАНА** пурнăç çулĕ тăрăх утма тытăннăранпа шăп та лăп çур ĕмĕр çитнĕ ятпа çирĕп сывлăхпа иксĕлми телей, виçесĕр савăнăçпа çутă ăраскал тата такăр çул сунатпăр.

Ан ватăл, ан чирле нихçан,
Çут хĕвел пек пул ялан.
Тав тăватпăр сана чĕререн,
Пулсам эс пирĕнпе ялан.

***ЫВĂЛĔСЕМПЕ ХĔРĔСЕМ, КĔРӲШĔПЕ КИНĔ, МĂНУКĔСЕМ ТАТА ТĂВАНĔСЕМ.***

**487. СРОЧНО КУПЛЮ старый дом в п. Ибреси или зем. участок. Тел.: 89278649262.** 2-1

**489. ТРЕБУЮТСЯ каменщики, штукатур-маляр, плиточник. Тел.: 2-29-15, 89279958810.**

**473. ПРОДАЕМ гравмассу, песок, транспортные услуги (КамАЗ-самосвал, экскаватор, кран). Т.: 89278401344.** 4-1

**494. ПРОДАЮ трактор Т-40 АМ в хор. сост. Тел.: 89278421068.**

**496. ТРЕБУЮТСЯ швеи. Оплата сдельная. Тел.: 89061366312.** 2-1

**Отдел образования администрации Ибресинского района выражает глубокое соболезнование начальнику отдела образования Николаеву Анатолию Аркадьевичу в связи с трагической смертью его племянницы**

**ЕФИМОВОЙ**
**Марии Владимировны.**

**Глубоко скорбим по поводу трагической гибели нашей одноклассницы, ученицы**

**ЕФИМОВОЙ**
**Марии**

**и выражаем соболезнование родным покойной.**

***Учащиеся и их родители, классный руководитель 8 класса Ибресинской средней школы №2.***

Ответственность за подробность и точность фактов и прочих сведений, опубликованных в газете, несут авторы. Редакция может публиковать статьи в порядке обсуждения, не разделяя точку зрения автора.

*Главный редактор АЛИМАСОВ К. Д.*

*Çĕнтерӳшĕн (За победу)*

Учредитель: Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела ЧР

Адрес РГУ «Редакция Ибресинской райгазеты «За победу»: 429700, п. Ибреси, ул. Садовая, д. 6

ТЕЛЕФОНЫ: главный редактор — 2-11-92, ответственный секретарь — 2-11-93, отдел сельской жизни — 2-11-95, отдел по дубляжу — 2-11-96, бухгалтерия, производственный участок — 2-11-97. АДРЕС ГУП "Вурнарский издательский дом": 429220, п. Вурнары, пер. Коммунальный, 4. ТЕЛЕФОНЫ: 2-12-30, 2-19-40.

Газета зарегистрирована Приволжским окружным межрегиональным территориальным управлением Министерства РФ по делам печати, телерадиовещания и средств массовых коммуникаций 13 августа 2002 года. Регистрационный номер ПИ № 18-0918.

Номер набран и сверстан в компьютерном отделе редакции, отпечатан в ГУП "Вурнарский ИД". Индекс 54814. Офсетная печать. Объем 1,5 п. л. Тираж 3252: чув. – 2427, русск. – 825 Зак. №

Газета выходит два раза в неделю — по средам и субботам на чувашском и русском языках. Материалы на правах рекламы обозначены знаком Ⓡ

Срок сдачи в печать — 17.00
Сдан в печать в 10.00

Ответственный за выпуск Димитриев Д. В.